# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ — 1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

58 (9020) № * Эрнекун, 2022 çулхи авăн (сентябрь) уйăхĕн 16-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ


Суйлав

## Ял çыннисем округ парламентне суйларĕç










**Сентябрĕн 11-мĕшĕнче Муркаш муниципалитет округĕн депутатсен Пухăвĕн депутачĕсен суйлавĕ иртрĕ.**

**Суйлавçăсен списокне пĕтĕмпе 22357 çынна кĕртнĕ. Списока кĕртнисенчен 11167 çын суйлава хутшăннă. Е вăл суйлавçăсен 49,95 процентĕ пулать.**

**Суйлавра 20 округпа 20 депутат суйланă. Ку кăтартусемпе иккĕмĕш страницăра паллашăр.**

**Пĕтĕмĕшле суйлав итогĕсемпе вара район хаçачĕн çитес номерĕнче тĕплĕн паллашма пултаратăр.**

**Сăн ÿкерчĕксенче – суйлаври самантсем.**

Спорт

## Шăматкун «Наци кросне» тухар

*Районти спортпа туслă ентешсем вăл е ку ăмăрту пирки интересленсех тăраççĕ. Спорт ăмăртăвĕсене активлă хутшăнакансем те сахаллăн мар. Пĕрисен ăнăçăвĕ теприсене те спортпа туслаштарать. Çак çул районта пурăнакансене спортпа тата массăллă физкультурăпа тачă çыхăнура пулма май парать.*

*Ыран Пĕтĕм Раççейри чупу кунĕ – «Наци кросĕ-2022» – иртет. Асăннă ăмăртăва муркашсене активлă хутшăнма чĕнетпĕр. «Наци кросĕ» Муркаш стадионĕнче 11 сехетре уçăлать. Тĕрлĕ категорири команда участникĕсем çак кун 300 метртан пуçласа 3 километр таран дистанцисенче вăй виçĕç.*

*Ăмăрту йĕркелӳçисем «Наци кросĕнче» шкул ачисемсĕр пуçне ача садне çӳрекенсен, район администрацийĕнче ĕçлекенсен, ял тăрăхĕсен администрацийĕсен, ĕç коллективĕсен командисем пуласса пăхса хăварнă. Курма пыракансемшĕн те ăмăрту интереслĕ пуласса шанатпăр. Ăмăртăва хутшăнакансен пурин те врач ирĕк пани пулмалла.*

*Хамăр инф.*

Сывлăх сыхлавĕ

## Грипран асăрханмалла

Сентябрĕн 5-мĕшĕнчен тытăнса Раççейре грипран вакцинациленессин кампанийĕ старт илчĕ. Çулленхи çак инфекцирен сыхланмалли чи лайăх мел – эпидеми пуçланичченхи тапхăрта прививка тутарасси. Вакцинациленесси сентябрь – ноябрь уйăхĕсенче иртет. Вăхăтра вакцинациленни аслисем тата ачасем чирлессине 80 – 90 процент таран чакарма май парать. Енчен те прививка тутарнă çын чирлерĕ пулсан та, чир çăмăллăн кăна иртет.

Грипран чи малтанах çынсемпе ытларах çыхăнса ĕçлекенсем, ватă çынсем, вăраха пыракан чирсемпе аптăракансем, çавăн пекех ачасем прививка тутарма тивĕç.

Çак вăхăта района аслă ÿсĕмрисене грипран прививка тумалли препарат 5 пин доза, ачасем валли 3880 доза илсе килнĕ. Вĕсене врач участокĕсем тăрăх валеçсе тухнă. Халĕ тухтăрсем прививка тума шкулсене, ача сачĕсене тухса çÿреççĕ. Прививка тÿлевсĕр.

Грипран прививка тутарасси ирĕклĕ япала пулин те, ыттисем пирки те шухăшласа пăхас пулать. Прививка тутарса эсир хăвăра кăна сыхламастăр, çавăн пекех хăвăрăн ачасен, çывăх çыннăрсен сывлăхĕшĕн те тăрăшатăр. Çавăнпа та прививка тутарасси ыйтăвĕпе участокри терапевтпа тĕл пулма васкăр.

**Г. СОКОЛОВА,**
**Муркаш район тĕп больницин эпидемиолог врачĕ.**

Республикăра

## Тÿрĕ эфирта – Чăваш Ен Пуçлăхĕ

Сентябрĕн 30-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ республикăра пурăнакансемпе тÿрĕ эфира тухать. Калаçу Ĕненӳ, шанчăк тата юрату кунĕнче иртет. Ăна Чăваш Республикин Пуçлăхĕ 2023 çула палăртнă Телейлĕ ачалăх çултаlăкне халалланă.

Сÿтсе явма палăртакан тĕп темăсем шутĕнче – ăнăçлă тата хăрушлăхсăр ачалăха тивĕçтересси, ачасене пур енлĕ аталанма тата хăйсене кăтартма республикăра тан майсем туса парасси. Регионăн ачалăхпа çыхăннă пуçарăвĕсен тата практикăллă ĕçĕсен тĕслĕхĕсене презентацилĕç.

Граждансем тата организацисем Телейлĕ ачалăх çултаlăкне ирттерессипе республика планне кĕртме хăйсен пуçарăвĕсене сĕнме пултараççĕ. «Тĕллев – республикăра пурăнакансемпе тÿрĕ калаçу йĕркеленĕ май, тематика çултаlăкне пĕлтерĕшлĕ мероприятисемпе пуянрах тăвасси», – палăртать Чăваш Ен Пуçлăхĕ Олег Николаев.

Харпăр хăйĕн сĕнĕвĕпе тухас е ыйту парас тесен, ятарлă форма тултармалла. «Тÿрĕ лини» вăхăтĕнче колл-центрсем ĕçлеççĕ, телефонĕ: 565-100.

Трансляцие 17 сехет те 30 минутран тытăнса 19 сехет те 30 минутчен «Россия 24» каналпа, Чăваш Ен наци телевиденийĕпе, çавăн пекех «ВКонтакте» социаллă сетьре «Чувашская Республика» ушкăнра пăхма май пулать.

«Тÿрĕ лини» Чăваш Республикин управлени центрĕ пулăшнипе иртет. Центр пĕлтернĕ тăрăх, социаллă сетьсем тата Патшалăх услугисен порталĕ урлă кăçал çултаlăк пуçланнăранпа 31 пин ытла пĕлтерни килнĕ. Вăл шутран 5 пине яхăн пĕлтерни вĕренÿ, сывлăх сыхлав сферисем, çемьесен тата ачасен социаллă хÿтлĕхĕ пирки пулнă.

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Администрацийĕн пресс-служби.**

## Тухăç – 1,7 хут пысăкрах

Чăваш Ен аграрийĕсем çак вăхăта тырă-пулă 292,1 пин гектар çинчен пухса кĕртнĕ. Ку вăл – 97 процент. Çапла вара вырма вĕçленсе пырать. Пĕтĕмпе 976 пин тонна тырă çапса тĕшĕленĕ. Ку вăл иртнĕ çулхинчен 1,7 хут нумайрах. Тухăç та 1,7 хут пысăкрах: иртнĕ çул тухăç пĕр гектар пуçне 19,5 центнерпа танлашнă пулсан, кăçал – 33,5 центнер.

Çĕр улми 17,3 пин тонна кăларса пухнă. Вăтам тухăç пĕр гектар пуçне 215 центнерпа танлашать. Аграрисем çавăн пекех 2,2 пин тонна пахча çимĕç, 52,4 тонна хăмла пухса кĕртнĕ.

**Чувашинформ.**

Çырăнтару – 2023

## Çитес çул илсе тăма çырăнтараççĕ

**«Çĕнтерÿ ялавĕ» хаçата 2023 çулхи январьтен илсе тăма почта уйрăмĕсенче çырăнтараççĕ.**

**Хаçата ултă уйăх илсе тăма çырăнмалли хак – 515 тенкĕ те 58 пус.**

**Редакци.**

**Выборы депутатов Собрания депутатов Моргаушского муниципального округа Чувашской Республики первого созыва**

(итоги голосования)

11 сентября 2022 года

Средняя явка избирателей 49,95%

| № округа | Отчиталось УИК (%) | Приняли участие в выборах | | Фамилия, имя, отчество победителя | Число и доля голосов избирателей, поданных за победителя | | Субъект выдвижения |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | | абс. | % | | абс. | % | |
| 1 | 100 | 510 | 46,83 | Любимов Геннадий Юрьевич | 308 | 60,39 | Всероссийская политическая партия «ЕДИНАЯ РОССИЯ» |
| 2 | 100 | 376 | 41,82 | Андреев Леонид Николаевич | 173 | 46,01 | Социалистическая политическая партия «СПРАВЕДЛИВАЯ РОССИЯ – ПАТРИОТЫ – ЗА ПРАВДУ» |
| 3 | 100 | 462 | 43,75 | Ермолаев Сергей Николаевич | 168 | 36,36 | самовыдвижение |
| 4 | 100 | 483 | 53,91 | Николаев Игорь Васильевич | 330 | 68,32 | Всероссийская политическая партия «ЕДИНАЯ РОССИЯ» |
| 5 | 100 | 477 | 42,59 | Прокопьев Вячеслав Александрович | 253 | 53,04 | самовыдвижение |
| 6 | 100 | 404 | 36,27 | Григорьев Николай Ефимович | 266 | 65,84 | Всероссийская политическая партия «ЕДИНАЯ РОССИЯ» |
| 7 | 100 | 726 | 57,99 | Бычков Михаил Ананьевич | 362 | 49,86 | Всероссийская политическая партия «ЕДИНАЯ РОССИЯ» |
| 8 | 100 | 556 | 48,01 | Малов Владимир Николаевич | 282 | 50,72 | Всероссийская политическая партия «ЕДИНАЯ РОССИЯ» |
| 9 | 100 | 623 | 50,73 | Клопов Аверкий Васильевич | 268 | 43,02 | Всероссийская политическая партия «ЕДИНАЯ РОССИЯ» |
| 10 | 100 | 689 | 57,51 | Расколова Светлана Олеговна | 550 | 79,83 | Всероссийская политическая партия «ЕДИНАЯ РОССИЯ» |
| 11 | 100 | 496 | 51,61 | Вязов Павел Николаевич | 407 | 82,06 | Всероссийская политическая партия «ЕДИНАЯ РОССИЯ» |
| 12 | 100 | 764 | 56,18 | Прокопьев Виталий Александрович | 663 | 86,78 | Всероссийская политическая партия «ЕДИНАЯ РОССИЯ» |
| 13 | 100 | 687 | 59,12 | Орлов Евгений Витальевич | 521 | 75,84 | Всероссийская политическая партия «ЕДИНАЯ РОССИЯ» |
| 14 | 100 | 658 | 51,77 | Сидюшкин Александр Александрович | 434 | 65,96 | Всероссийская политическая партия «ЕДИНАЯ РОССИЯ» |
| 15 | 100 | 505 | 49,51 | Иванов Александр Валерьевич | 426 | 84,36 | Всероссийская политическая партия «ЕДИНАЯ РОССИЯ» |
| 16 | 100 | 486 | 44,92 | Давыдов Александр Платонович | 412 | 84,77 | Всероссийская политическая партия «ЕДИНАЯ РОССИЯ» |
| 17 | 100 | 600 | 48,54 | Фомин Валерий Витальевич | 368 | 61,33 | Всероссийская политическая партия «ЕДИНАЯ РОССИЯ» |
| 18 | 100 | 657 | 57,89 | Егорова Валентина Николаевна | 430 | 65,45 | Всероссийская политическая партия «ЕДИНАЯ РОССИЯ» |
| 19 | 100 | 562 | 48,32 | Тимофеев Ростислав Николаевич | 364 | 64,77 | Всероссийская политическая партия «ЕДИНАЯ РОССИЯ» |
| 20 | 100 | 446 | 46,60 | Семенов Алексей Вадимович | 258 | 57,85 | Социалистическая политическая партия «СПРАВЕДЛИВАЯ РОССИЯ – ПАТРИОТЫ – ЗА ПРАВДУ» |

# Ыйтусене пĕрлех татса парăпăр

Чи малтанах Хорнуй ял тăрăхĕн территорийĕнче пурăнакансене – депутатсен Муркаш муниципалитет округ Пухăвĕн депутачĕсен сентябрĕн 11-мĕшĕнчи суйлавĕнче хăйсен сассисене маншăн панисене пысăк тав сăмахĕ каланă пулăттăм. Тавтапуç шаннăшăн, ĕненнĕшĕн. Апла малашне те пĕрле пулар, хамăрăн пĕрлехи ыйтусене татса парассишĕн пĕрле тимлер. Пĕр шухăшлă пулсан, пĕр-пĕрне ăнланса ĕçлесе пырсан вара эпир кирек епле ыйтăва та татса пама пултаратпăрах.

Юлашки çулсенче пирĕн тăрăхра пурăнакансем вырăнти ыйтусене татса парассипе пуçарулăх бюджечĕн программи меллĕ пулнине тĕрĕс ăнланса илчĕç. Пирĕн ял тăрăхĕ пысăках мар тейĕпĕр, пĕтĕмпе те 4 ял кăна. Апла пулин те республика конкурсне хутшăнса пĕлтĕр вырăнти пуçарулăх проекчĕсене 5 пурнăçа кĕртме пултартăмăр, самай калăпăшлă та пĕлтерĕшлĕ ĕçсем туса ирттерме вăй çитертĕмĕр. Шаптакри Центральная урамра тата Хорнуйри Новая урамра шыв уçламалли башньăсене тĕпрен юсанă, Тойкилтĕри Западная урамра тата Хорнуйри Садовая урамра çулсене вак чул сарса хытарнă, Хорнуйри Çĕнтерӳ паркĕнче тирпей-илем, хăтлăх ĕçĕсем туса ирттернĕ. Çавăн пекех ял тăрăхĕн çул-йĕр фончĕ шучĕпе Хорнуйри Садовая урам çулне те юсама май килнĕ. Эпĕ пĕлнĕ тăрăх, 5 проект таран пурнăçа кĕртекен ял тăрăхĕ пĕлтĕр районĕпе те урăх пулман.

Кăçал та вырăнта пурăнакансен пуçарулăхне тĕпе хурса пурнăçа кĕртекен хăтлăх ĕçĕсем ялсенче малалла тăсăлчĕç. Кăçал пуçарулăх бюджечĕн проекчĕсене 4 пурнăçа кĕртме пултарнă.

Çапла, çитес çултан район шайĕнче влаç тытăмĕ улшăнать. Район вырăнне Муркаш муниципалитет округĕ йĕркеленет. Депутатсен ял тăрăхĕнчи Пухăвĕн депутачĕсем пулмаççĕ. Ял тăрăхĕн администрацийĕ те муниципалитет округĕн тытăмне куçать. Ку вара пирĕн, ял çыннисен, вырăнти ыйтăвĕсем пĕтессине пачах пĕлтермест. Хамăрăн ыйтусене татса парассишĕн малашне те хăмăрăнах ытларах тимлемелле пулать. Территори общество хăй тытăмлăхне йĕркелессипе задачăсем тăраççĕ. Ытти ыйту та пур.

Апла пулин те эпир умри задачăсене, ыйтусене татса пама пултаратпăрах. Мĕншĕн тесен пирĕн тăрăхра пуçаруллă, мал курăмлă çынсем пурăнаççĕ, вĕсем малашлăха çирĕп кăмăлпа пăхаççĕ. Тăрăшуллă ĕçлеме те пултараççĕ, культурăллă канма та пĕлеççĕ, спорт ăмăртăвĕсенче те маттур. Ку вара – чи пĕлтерĕшли.

**А. СИДЮШКИН,**
**депутатсен Муркаш муниципалитет округ Пухăвне суйланнă депутат.**

# Пысăк чыс – пысăк яваплăх

Пурне те паллă ĕнтĕ, çынсен, суйлавçăсен шанăçне тивĕçесси – пĕр япала, анчах та çав шанăçа тӳрре кăларасси – пачах урăх япала, çакă вăл питех те çирĕп яваплăх. Çакна эпĕ питĕ лайăх ăнланатăп. Çавăнпа та хама Оринин суйлав округĕпе депутатсен Муркаш муниципалитет округ Пухăвĕн депутатне суйланма кандидата тăратма килĕшни – ял çыннисем умĕнчи хамăн пĕтĕм яваплăха туйса тата ăнланса тунă утăм.

Эпĕ хам шăпах ĕнтĕ Оринин тăрăхĕнчен, Атапай ялĕнче çуралса ӳснĕ. Шупашкарта строительство компанине ертсе пыратăп пулин те, манăн «тымарсем» тăван тăрăхпа уйрăлми çыхăннă, тăван ялта тăтăшах пулатăп, манăн кил хуçалăхĕ та кунтах.

Ял çыннисемпе, тăван тăрăхра пурăнакансемпе, Оринин ял тăрăхĕн администрацийĕпе çирĕп çыхăну унччениех йĕркеленнĕ. Халĕ вара, ял тăрăхĕн территорийĕнче пурăнакансем мана депутатсен  Муркаш муниципалитет округ Пухăвĕн депутатне суйланă май, çак çыхăну татах çирĕпрех пулĕ тесе шантарсах калас килет.

Эпĕ хама ял çынниех тесе шутлатăп. Ял çыннине паян мĕн хумхантарни, мĕнле ыйтусем канăç паманни маншăн ют мар. Вырăнти ыйтусене унччен те эпир Оринин ял тăрăхĕн администрацийĕпе, унăн пуçлăхĕпе Валентина Пушковăпа яланах пĕрле канашласа, сӳтсе явса татса пама тăрăшнă. Малашне те ку çаплах пулĕ. Халĕ вара, депутатсен Муркаш муниципалитет округ Пухăвĕн депутачĕн полномочийĕпе усă курса, пысăкрах та пĕлтерĕшлĕрех ыйтусене округ шайĕнче те татса пама май пулĕ тесе шухăшлатăп.

Çавна та каласа хăварас килет. Пирĕн Оринин ял тăрăхĕн администрацине чăннипех те маттур, пултаруллă, вырăнта пурăнакансемшĕн чăннипех чунтан çунса тăракан çын ертсе пырать. Ун пирки эпĕ ыррине кăна калама пултаратăп. Çыннисем те пирĕн тăрăхра питĕ пуçаруллăскерсем. Юлашки çулсенче кăна ялсенче туса ирттернĕ пĕлтерĕшлĕ хăтлăх ĕçĕсем çавна лайăх çирĕплетеççĕ. Малашне вара пурте пĕрле пулса эпир хамăрăн пурнăçа татах хăтлăрах, лайăхрах тума пултарăпăр. Пĕр-пĕрне ăнланса, пĕр шухăшлă пулса ĕçлени кирлĕ кăна.

Татах тепĕр хут палăртнă пулăттăм, депутата суйланни – чăннипех те пысăк чыс. Кунпа пĕрлех – пысăк яваплăх та. Çакă вăл эпĕ хам тĕлĕшпе лайăхрах майсем туса хатĕрлес е служба картлашкипе çӳлелле хăпарас тĕллевпе тунă утăм мар. Тĕп тĕллев – хамăрăн ыйтусене пĕрле лайăхрах татса парасси. Çавăнпа та тăван тăрăхра пурăнакансене – сентябрĕн 11-мĕшĕнчи суйлавра маншăн сасăланисене – чĕререн тухакан тав  сăмахĕ калатăп. Малашне те пĕрле пулар, хамăрăн ырă малашлăхшăн малашне те пĕрле тăрăшар. Пĕрлĕхре – вăй.

**П. ВЯЗОВ,**
**депутатсен Муркаш муниципалитет округ Пухăвне суйланнă депутат.**

Наци проекчĕсем. Патшалăх программисем

# Ялсем малашлăхпа пурăнаççĕ



Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин ертӳçисем ялсен аталанăвне çĕнĕ шая çĕклессипе ĕçленине пурнăçа кĕрсе пыракан наци проекчĕсем, патшалăх программисем туллин уçса параççĕ. «Ялта пурăнма хăтлă та интереслĕ пултăр. Унти çынсем хăйсен малашлăхне курса тăччăр, аталану утăмĕсемпе пырса çамрăксене яла хăварассипе тăрăшчăр», – тет Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Олег Николаев. Хăйĕн сăмахĕсене ĕçпе çирĕплетессине те вăл иккĕмĕш вырăна хăвармасть. Çакăнта çĕршыври наци проекчĕсем те хăйне евĕр пулăшу пулса тăраççĕ.

Республикăра кăçал ял клубĕсене çĕнĕрен тăвассипе тата киввисене юсассипе пилĕк çуллăх программи ĕçлеме пуçларĕ. Республика Пуçлăхĕ хушнипе «Культура тата туризм аталанăвĕ» патшалăх программи çумне «Строительство (модернизация) муниципальных учреждений культуры клубного типа» подпрограмма хушăнчĕ. Çак йĕркесемпе килĕшӳллĕн 5 çул хушшинче республикăри ялсенче 25 клуб тума тата 55 клуба юсаса çĕнетме палăрнă. Çакна валли кăçал çеç республика бюджетĕнчен 220 миллион тенкĕ уйăрнă.

Асăннă йĕркепе пирĕн районта кăçал Çатракасси ял тăрăхĕнчи Очăкассинчи ял клубĕнче юсав ĕçĕсем пыраççĕ. Иртнĕ кунсенче эпир унта район администрацийĕн культура, архив ĕçĕсен тата туризм пайĕн ертӳçипе Л. Рыжковăпа тата Çатракасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕпе Н. Никитинăпа пулса куртăмăр. Ĕçсем планпа килĕшӳллĕн пыни тата подряд организацийĕ тăрăшуллă ĕçлени курăнчĕ. Клуб ертӳçи Е. Пучкова та çавнах çирĕплетрĕ.

– Патшалăх программипе килĕшӳллĕн Очăкасси ял клубне тĕпрен юсаса çĕнетме пире 7,5 миллион тенкĕ уйăрса пачĕç. Çак укçа-тенкĕ ума лартнă тĕллевсене пурнăçлама çитмелле. Клубри юсав ĕçĕсене «Ситистрой» чикĕллĕ яваплăхлă общество пурнăçлать. Строительсем ĕçе вăхăтра вĕçлеме шантараççĕ. Çавăнпа та çу уйăхĕнче пуçăннă юсав ĕçĕсем октябрь уйăхĕнче вĕçленмелле. Çакна валли эпир паян чăрмав курмастпăр, – терĕ юсав ĕçĕсем пынипе паллашнă хыççăн Л. Рыжкова. Çывăхра ĕçлекен строительсен ушкăнĕ унăн сăмахĕсене çирĕплетнине пĕлтерчĕ. Кунта Любовь Александровна наци проекчĕпе районта юлашки çулсенче пурнăçланă ĕçсем çинче те чарăнса тăчĕ. Юлашки çулсенче Мăн Сĕнтĕрте модельлĕ библиотека, Ярапайкассинчи Культура çурчĕ хута кайнă.

– Патшалăх программи ĕçленипе пĕрлех ял тăрăхĕ наци проекчĕсене епле пурнăçа кĕртсе пырать-ха? – кăсăклантăм çывăхра тăракан Н. Никитинăран.

– Çатракасси ял тăрăхĕ наци проекчĕсем урлă патшалăх ялсене аталанма тата çĕнелме пулăшнине лайăх ăнланать. Акă «Вĕренӳ» наци проекчĕпе Кашмаш шкулĕ уçăлчĕ. Кунти çулсене турăмăр-юсарăмăр, ял урамне шкулпа 240 метр чухлĕ тротуарпа сыпăнтартăмăр, – пулчĕ хурав.

– Надежда Геннадьевна, эпĕ пĕлнĕ тăрăх эсир пуçарулăх бюджечĕпе те анлăн усă курса ялсене çĕнĕ сăн кĕртетĕр. Кунта хăш объектсене палăртса хăварнă пулăттăр? – ыйтрăм ял тăрăхĕн пуçлăхĕнчен.

– Кунта хамăр тăрăшнисĕр пуçне ял çыннисен пуçарулăхне ырлатăп. Шăпах вĕсем тăрăшнипе юлашки çулсенче Кашмашра, Çатракассинче, Ятманта, Шупуçпе Очăкассинче çулсем тума пултартăмăр. Паян та çак мелпе ĕçлесе Кашмашри Молодежная тата Шупуçĕнчи Комсомольская урамсенче вак чул сарса çул тăвас ĕçсем пыраççĕ, – терĕ ял тăрăхĕн пуçлăхĕ.

Пуçарулăх бюджечĕпе усă курса çулсем тăвассине ĕçленĕ хушăрах ял тăрăхĕ бюджет укçи-тенкипе пĕлсе усă курма тăрăшать. Çапла вара иртнĕ çул «Чăваш Республикинче ял тăрăхĕсене комплекслă аталантарасси» программăпа усă курса ялсенчи шыв башнисене юсама май килнĕ. Çак ĕçсем ял тăрăхĕн пуçлăхĕ пĕччен ĕçленипе пулманнине Н. Никитина усăмлă каларĕ. Палăртнă ĕçсене вăхăтра пурнăçлама активистсем юнашар пулни пулăшать. Çапла вара Шупуçĕнчи Н. Максимов, Ятманти А. Боярина, Очăкассинчи Л. Васильев, Çатракассинчи А. Охотниковпа С. Федорова, Г. Григорьевăпа А. Хромова, Кашмашри А. Иванова ĕçсене пурнăçлама пулăшсах пынă.

**Сăн ӳкерчĕкре: Е. Пучкова, Л. Рыжкова, Н. Никитина Очăкассинчи клуб умĕнче.**

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

Ĕç ветеранĕ

# Педагогикăри ĕç стажĕ – 55 çул



Сăн ӳкерчĕкре Ильинка ял тăрăхĕнчи Валентина Чигиревăна куратăр. Вăл иртнĕ çĕнĕ çул умĕн 90 çул тултарчĕ. Валентина Александровнăн ĕç ĕмĕрне педагогикăна халалланă, ĕç стажне 55 çула çитернĕ, çак тапхăрта туберкулезпа чирлĕ ачасен санаторийĕнче ĕçленĕ çулсем те пулнă. Ăна çывăх пĕлекенсем ун пирки «пысăк чĕреллĕ» вĕрентекен тесе калаççĕ. Вăл Ильинка шкулĕн историне паллă йĕр хăварнă. Çулĕпе сумлă пулин те, иртнине лайăх астăвать, ăшă кулăпа кĕтсе илсе кăмăллăн калаçрĕ вăл. 1938 çулхине вăл шкула вĕренме тытăннă.

– Мана никам та шкула алăран çавăтса кайса яман, питĕ вĕренес килнĕрен шкула эпĕ хам тантăшсенчен иртерех кайнă. Эпĕ ун чухне сакăр çул та тултарман пулнă-ха, çавăнпа та мана малтанах шкула йышăнман. Çавăншăн эпĕ мĕн чухлĕ макăрман пулĕ. Ир тăраттăмччĕ те шкула кайса парта хушшине ларатăмччĕ, мана вара унтан кăмăллăн кăларса яратчĕç. Çапла пилĕк уйăх та çитрĕ. Манăн анне РОНО ертӳçинчен тархасласа ыйтсан кăна мана вĕренме ирĕк пачĕç, – аса илет вăл хăйĕн ачалăхне.

Вăл каланă тăрăх, Ильинкăран илемлĕрех вырăн çук та пулĕ, уйрăмах малтанхи вăхăтсенче хитрен туйăннă. Çак ял Атăл хĕрринчех вырнаçнă. Çурхи вăхăтра вара шыв пӳртсем умнех тулса хăпарнипе татах та илемлĕрех курăннă.

– Кунта уйрăмах малтанхи вăхăтсенче суту-илӳ нумай тунă, кану вырăнĕ те пулнă. Эпир ача чухне çынсем питĕ йышлă кусна. Атăл тăрăх иртен-каякан кимĕсене çыран хĕррине пăхма чупаттăмăр, хăш-пĕр çын кунта чарăннă та çакăнтах тĕпленни те пулнă. Эпĕ шухăшланă тăрăх, пирĕн тăрăхра вырăсла калаçакан çак сăлтавпа та нумайланса пынă. Ильинкăри «Лысая гора» текен вырăна чылайăшĕ пĕлет. Ăна Кĕтерин патшапа çыхăнтараççĕ, вăл унта пулнă иккен. Аслисем каланă тăрăх, çав тĕлте нихăçан та нимĕн те ӳсмен мĕн, – çапла каласа кăтартать Валентина Александровна.

Чылайăшĕн ачалăхĕ вăрçăпа пĕр килнĕ. Вăрçă çулĕсенче ачасем те аслисемпе танах фронта пулăшса тăнă. Çав вăхăтсем пирки хурланса аса илчĕ вăл.

– Пирĕн атте те ыттисем пекех вăрçăра çапăçнă, вăрçă пĕтсен тепĕр виçĕ çултан тин киле таврăнчĕ вăл, çав тери кĕтсе ывăннă эпир ăна. Хăшĕн-пĕрин ашшĕ аманса маларах килетчĕ, теприсем патне вара вилнине пĕлтерекен е фронтри хыпарсене пĕлтерекен çырусем килетчĕç те çынсем пĕрле вулатчĕç, эпир итлеттĕмĕр. Ачаллах нумай ĕçленĕ, кĕл, чăх-чĕп каяшĕ пухаттăмăрччĕ, уйра ĕçлеттĕмĕрччĕ. Аслисемпе пĕрле фронт валли посылка хатĕрлеттĕмĕрччĕ. Аслисем алсиш-нуски çыхатчĕç, эпир аслисене çип пĕтĕрсе параттăмăр, жакет çĕлеттĕмĕр. Махорка хутаççисем çĕлеттĕмĕр те çиеле «Бей врага и возвращайся с победой» тесе çыраттăмăр. Посылкăна ялти хыпарсене пĕлтерекен çырусем çырса чикеттĕмĕрччĕ. Ильинка шкулĕн ачисем концертпа тухса çӳретчĕç. Çырма тетрадь çукчĕ, шкула хутса ăшăтмастчĕç, классенче сивĕччĕ, çавах чăтнă, вĕреннĕ, – аса илет ветеран.

Вăл аслисем каланине аса илнĕ тăрăх, вăрçă пынă чухне Ильинка тăрăхне ытти вырăнтан 600 çынна эвакуациленĕ. Ун чухне Ленинград блокадинче пулнисем те, Мускавран та, таçтан та илсе килнĕ. Вĕсем хушшинче мĕнле кăна çын пулман пулĕ, профессорсем те, артистсем те, ахаллисем те. Ильинка шкулĕнче çав профессорсем вĕрентни те пулнă. Вăрçă вăхăтĕнче пирĕн патран Атăл урлă бомбардировщик тӳпене çурасла кĕрлеттерсе вĕçсе каçнине астăвать вăл. Каярах Ильинка тăрăхĕнче «Московский большевик» кану вырăнĕ йĕркеленĕ. Совет çынни йăлтах тӳснĕ, çĕнтерӳпе çывхартнă. Ку савăнăçа сăмахпа каласа ăнлантарма та çук.

1947 – 1951 çулсенче Валентина Александровна Козьмодемьянск шкулĕнче вĕреннĕ, хыççăн педагогика училищине вĕренме кайнă. Пуçламăш классен учителĕн дипломне алла илнĕ, ăна Омск облаçне ĕçлеме янă. Çĕпĕр тăрăхĕнче пурăнма, унти ачасене вĕрентме тивнĕ ăна. Унтан таврăнсан вара Мăн Сĕнтĕр шкулĕнче пионервожатăйра ĕçлеме тытăннă, хыççăн тăван шкулта тăрăшнă. Ачасемпе урок хыççăн ĕçленисене те вăл кăмăлпа аса илет. Малтан киле панă ĕçсене тунă, кайран вара тĕрлĕ ташă вĕреннĕ, хăйсен пукане театрĕнче вылянă тата вăхăта ытти енĕпе кăсăклăн ирттернĕ.

Çавăн пекех вăл ытти учительсене те улăштарнă. Тивĕçлĕ канăва тухнă хыççăн та вăл тепĕр çичĕ çул шкулта ĕçленĕ. Ĕçне кура хисеплĕ, унăн тăрăшулăхне тĕрлĕ чысламăпа хакланă. Ĕç çулĕсене, ĕçтешĕсене Валентина Александровна кăмăллăн аса илсе калаçса ларчĕ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

Райадминистрацире

# Тава тивĕçлĕ ĕçшĕн

Районăн экономикăпа социаллă пурнăç аталанăвне тӳпе хывнăшăн тата обществăлла ĕçсенче активлă пулнăшăн Муркаш район администрацийĕн 2022 çулхи августăн 15-мĕшĕнчи 866-мĕш номерлĕ йышăнăвĕпе вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен ветеранне **Маргарита Петровна РУБЦОВĂНА** район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

Саламлатпăр

Хисеплĕ те хаклă мăшăра, юратнă аттене – Отаркккă ялĕнче пурăнакан **Николай Валентинович ПОРФИРЬЕВА** 50 çул тултарнă ятпа саламлатпăр.



Тăвансемпе савăнса пурăнма, килекен кашни кунпа киленме аксĕлми вăй-хал, ырă кăмăл, юрату сунатпăр. Эпир сана юрататпăр, мухтанатпăр. Тата нумай пурăнма сывлăх тата килĕшӳ сунатпăр.

**Салампа: мăшăрĕ, 2 хĕрĕ, ывăлĕ тата çывăх тăванĕсем.**

Мăн Сĕнтĕр ялĕнче пурăнакан **Михаил Петрович НИКОЛАЕВА** 70 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр.



Нумай-нумай çул пурăнма çирĕп сывлăх, тулли телей те ăнăçу сунатпăр. Яланах хаваслă та ырă, чунупа çамрăк пул, чир-чĕр мĕнне пĕлмесĕр тăван кил ăшшине упраса нумай çул пурăн. Ачусен тата мăнукусен пархатарне ĕмĕр-ĕмĕр курмалла пултăр.

**Салампа: мăшăрĕ, хĕрĕсем, ывăлĕ, кинĕ, мăнукĕсем.**

Хамăрăн ĕçтешĕмĕре – Ярапайкассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул директорĕнче ĕçлекен **Александра Александровна СКВОРЦОВĂНА** юбилей ячĕпе чун-чĕререн тата ăшшăн саламлатпăр.



Сирĕн сывлăхăр хурçă пек çирĕп, кăмăлăр сар çу пекех çемçе, пурнăç çулĕ телейлĕ те вăрăм пулччăр. Малашне те пархатарлă ĕçре чуна парса ĕçleme иксĕлми вăй-хал сунатпăр. Çумăнта яланах çывăх çыннăрсем, тус-юлташсем пулччăр. Мĕн шухăшланине пурнăçа кĕртсе пыма Турри пулăшсах тăтăр.

**Ярапайкасси шкулĕн коллективĕ.**

Тӳрĕ ыйту – тӳрĕ хурав

# «Суд йышăнăвĕ мĕншĕн пурнăçланмасть?»

Редакцире пулнă май, **район хасчĕн вулавçи Борис Оньков** çавăн пирки каласа парĕ. Хальхи вăхăтра Турай ял тăрăхĕнчи Мăн Токшик ялĕнче шыв çук. Шывпа тивĕçтересси пирки суд йышăнăвĕ вара 2021 çулхи декабрĕн 6-мĕшĕнчех пулнă. «Суд йышăнăвĕ ма халь те пурнăçланмасть?» – тесе ыйтать вăл.

Ку тĕлĕшпе официаллă хурава **Турай ял тăрăхĕн администрацийĕнчен** илме май килчĕ. Çакăн пирки пĕлтерни унта.

2021 çулхи декабрĕн 6-мĕшĕнче Турай ял тăрăхĕн администрацийĕ тĕлĕшпе Муркаш район сучĕн кун пек йышăнăвĕ чăннипех те пулнă. Сăмах Мăн Токшик ялĕнче пурăнакансене централизациленĕ майпа шывпа тивĕçтерессине йĕркелеме 21:17:210201:245 тата 21:17:210202:421 кадастр номерлĕ çĕр участокĕсем çинчи икĕ шыв башнине электричество сечĕпе технологи мелĕпе çыхăнтарасси, çапла вара Мăн Токшик ялĕнчи Ленин, Школьная, Клубная, Новая урамсенче пурăнакан граждансене шыв парса тăма тытăнасси пирки пырать.

Суд йышăнăвне пурнăçласа, асăннă йышăну саккунлă вăя кĕнĕ хыççăн 6 уйăх хушшинче Турай ял тăрăхĕн администрацийĕ хăш-пĕр ĕçсе туса ирттернĕ. Мăн Токшик ялĕнчи Школьная, Клубная, Новая урамсенче пурăнакансене централизациленĕ майпа шывпа тивĕçтерессине йĕркелес тĕллевпе 21:17:210201:245 тата 21:17:210202:421 кадастр номерлĕ çĕр участокĕсем çинче вырнаçнă икĕ шыв башнине электричество сечĕпе технологи мелĕпе çыхăнтарнă. Мĕншĕн тесен Турай ял тăрăхĕн 2022 çулхи бюджетĕнче шывпа тивĕçтерсе тăма уйăрма палăртнă укçа-тенкĕ сумми çав ĕçсене туса ирттерме кăна çитнĕ.

Мăн Токшик ялĕнчи Школьная, Клубная, Новая урамсенчи шыв сечĕсене юсанă. Асăннă ĕçсем валли 2 млн та 367 пин те 133 тенкĕ уйăрнă. Ку юсав ĕçĕсене пуçарулăх бюджечĕн мелĕпе туса ирттерме май килнĕ. Кирлĕ укçа-тенкĕрен 1 млн та 420 пин те 279 тенкине республика бюджетĕнчен субсиди шучĕпе уйăрнă, 710 пин те 139 тенкĕ – вырăнти бюджет укçитенки (вăл шутран 500 пин тенкĕ – район бюджетĕнчен уйăрнă субсиди), 263 пин те 713 тенкĕ – ял çыннисем пухнă укçа.

Мăн Токшикри Ленин урамĕнчи шыв пăрăхĕн системине проектлама тата тума укçа 6 млн та 765 пин тенкĕ ытла республикăн адреслă инвестици программипе килĕшӳллĕн республика бюджетĕнчен килмелле пулнă.

Мăн Токшик ялĕнче шыв пăрăхĕсен сетьне тата шыв башнине тăвассипе республикăн адреслă инвестици программине хутшăнма Муркаш район администрацийĕ 2021 çулхи ноябрĕн 1-мĕшĕнче заявкăпа документсене Чăваш Республикин Строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх министерствине тăратнă. Анчах та республика бюджечĕнче çав тĕллевпе уйăрма укçа-тенкĕ çук пирки инвестици политикин канашĕ документсене йышăнман.

Турай ял тăрăхĕн администрацийĕ çулталăк хушшинче шывпа тивĕçтермелли объектсем тăвас енĕпе республика конкурсне хутшăнма вĕçĕмех Чăваш Республикин Строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх министерствин, Ял хуçалăх министерствин официаллă сайчĕсен мониторингне ирттернĕ. Çавăн пекех ял тăрăхĕн администрацийĕ çулталăк пуçланнăранпа кашни уйăхрах Мăн Токшик ялĕнчи Ленин урамĕнчи шывпа тивĕçтермелли системăна проектлама укçа-тенкĕ уйăрма ыйтса Муркаш район администрацине те тухнă.

2022 çулхи август уйăхĕнче Муркаш район администрацийĕнчен çакăн пек çыру илнĕ:

«Мăн Токшик ялĕнчи Ленин урамĕнче пурăнакансене централизациленĕ майпа шывпа тивĕçтерессин ыйтăвĕпе Муркаш район сучĕн 2021 çулхи декабрĕн 6-мĕшĕнчи йышăнăвне пурнăçлас тĕллевпе Муркаш район администрацийĕ Муркаш муниципалитет округĕн 2023 çулхи тата планланă 2024 çулпа 2025 çулхи тапхăрти бюджетне йĕркеленĕ чухне Мăн Токшик ялĕнчи Ленин урамĕнчи шывпа тивĕçтермелли системăна тăвассипе проектпа смета документацийĕ хатĕрлеме муниципалитетăн адреслă инвестици программи шучĕпе 6 млн та 765 пин те 204 пин тенкĕ уйăрма пăхса хăварĕ».

Хальхи вăхăтра Турай ял тăрăхĕн администрацийĕ асăннă ĕçсене пурнăçлама проектпа ĕç документацийĕ туса хатĕрлессипе республикăн адреслă инвестици программине хутшăнса бюджетсем хушшинчи субсиди тивĕçме Чăваш Республикин Строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх министерстви валли кирлĕ документсен пуххине хатĕрлессипе ĕçлет.

Мăн Токшик ялĕнчи Ленин урамĕнче хальхи вăхăтра уйрăм çынсен 71 хуçалăхĕ шутланать. Вăл шутра вĕçĕм пурăнаканнисем – 54 хуçалăх. 54 хуçалăхран 50-шĕнче шыв илме кашнийĕнех харпăр хăйĕн çăлĕ пур. Вĕçĕм пурăнманнисен 17 хуçалăхĕнчен 11-шĕнче те хăйсен çăлĕсем пур. Хăйсен килти хуçалăхĕнче çăл çуккисем урамри çăлсемпе усă кураççĕ. Кун пек çăлсем Ленин урамĕнче 7. Вăл шутран 4-шĕ – çĕннисем, 2021 çул вĕçĕнче тата 2022 çул пуçламăшĕнче тунисем. 2021 çулхи октябрь уйăхĕнче Мăн Токшикри Ленин урамĕнчи çăлсенчи шыв пахалăхне лаборатори тĕпчевĕ туса тĕрĕсленĕ. Бактериологи тĕпчевĕсем кăтартса панă тăрăх, шывра сывлăхшăн сиенлĕ бактерисем çук.

## Документсем хатĕрлессипе ĕçлеççĕ

***Район хаçатне вулакан Борис Оньков*** редакцие çавăн пирки хыпарларĕ. Муркаш ял тăрăхне кĕрекен Çурлатри ялĕнче пушар машинине шыв илме ятарласа хатĕрленĕ вырăнсем çук. Ку вара пушар хăрушсăрлăхне тивĕçтерес енĕпе питех те пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать. Вăл каласа панă тăрăх, ялти пĕве тислĕкпе тата йăлхапа тулса ларнă ĕнтĕ. Ăна тасатма шутлакан çук. «Пĕвене тасатма, унта шыв илме пушар машинипе пымалла тума май çук-ши?» – тесе ыйтать вулакан.

Вулакан ыйтăвĕ çине ***Муркаш ял тăрăх администрацийĕн пуçлăхĕ Алексей Кириллов*** çапла хурав пачĕ:

«Чăваш Республикин «Развитие потенциала природно-сырьевых ресурсов и обеспечение экологической безопасности» патшалăх программин «Развитие водохозяйственного комплекса Чувашской Республики» программи пур. Ăна Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн 2018 çулхи декабрĕн 18-мĕшĕнчи 525-мĕш номерлĕ йышăнăвĕпе çирĕплетнĕ. Асăннă программăпа килĕшӳллĕн, Муркаш ял тăрăх администрацийĕ Çурлатри ялĕнчи гидротехника сооруженине тĕпрен юсама документаци пухма пуçланă.

2017 çултан тытăнса Чăваш Республикинче пуçарулăх бюджечĕн программи пурнăçа кĕрет. Çавăнпа та вырăнти бюджета планлассин тата уйăрса тухассин ĕçне вырăнта пурăнакансен пурин те хутшăнма май пур. Паянхи куна пуçарулăх бюджечĕн программине хутшăнса Çурлатри ялĕнчи Речная урамри пĕвене тасатассипе ялта пурăнакансемпе ĕçсем пыраççĕ».

## Ял çыннисен активлăхĕнчен чылай килет

***Турай ял тăрăхне кĕрекен Мăн Токшик ялĕнчен редакцие Венера Волкова килчĕ. Вăл каласа панă тăрăх, ялта августăн 26-мĕшĕнче пушар пулнă. Пушарнăйсем васкаварлă пулнипе кăна вут-çулăма сарăлма паманни пирки калать, вĕсене тав тăвать.***

Кунпа пĕрлех вăл çавăн пирки те сăмах пуçарчĕ. Ялта икĕ пĕве иккен. Анчах та шыв хĕрне пыма ансăр çул анчах. Техникăпа пырас пулсан та ниепле те çаврăнса хăпарма май çук.

«Пĕве хĕрне пушар машинипе анса хăпарма йĕркеллĕ çул, техникăна çаврăнмалли вырăн йĕркелеме май çук-ши?» – тесе ыйтать хĕрарăм.

Ку ыйтупа ***Турай ял тăрăх администрацине*** тухма тиврĕ. Çакăн пек хурав пачĕç администрацирен:

«Пушар сӳнтерме шыв илмелли пĕвесем патĕнче техникăна çаврăнма, автомашинăсем, насус станцийĕсем вырнаçтарма вак чул сарса хытарнă ятарлă площадкăсем (пирссем) кирлех.

Турай ял тăрăх администрацийĕ кăçал Мăн Токшик ялĕнчи пĕве патĕнче пирс тума çĕнĕ вырăн йĕркелеме, çакна пушар надзор ĕçĕ-хĕлĕн тата профилактика ĕçĕн Муркаш районĕнчи пайĕпе килĕштерме, çавăн пекех çак ĕçсене туса ирттерме смета хатĕрлеме палăртать.

Пирс тата çул тума мĕн чухлĕ укçа-тенкĕ кирлĕ пулассине шутласа палăртнă хыççăн çак ĕçсене пуçарулăх бюджечĕн мелĕпе туса ирттересси, çавна валли республика бюджетĕнчен уйăракан укçа-тенкĕне явăçтарасси пирки Мăн Токшик ялĕнче пурăнакансемпе пĕрлехи пуху ирттермелле пулать.

Кунсăр пуçне Турай ял тăрăх администрацийĕ Муркаш район администрацине çырупа тухма, Муркаш муниципалитет округĕн 2023 çулхи тата планланă 2024 çулпа 2025 çулхи тапхăрти бюджечĕн проектне хатĕрленĕ чухне Мăн Токшик ялĕнчи пĕве патĕнче пирс йĕркелеме тата пушар машинине кĕрсе тухма çул тума вырăнти бюджетран укçа-тенкĕ уйăрма пăхса хăварма ыйтма палăртать».

Апла пулсан Венера Волкова хускатнă ыйтăва çитес çулах татса пама май пулас пек туйăнать. Ял çыннисен хăйсен те пуçарулларăх пулни кирлĕ кăна.

## Пуçарулăх бюджечĕн проекчĕсен конкурсне хутшăнма май пур

«Одноклассники» социаллă сеть урлă редакцие çырупа **пенсионер, МВД хисеплĕ ветеранĕ Владимир Васильев** тухрĕ. Пысăках мар шыв кӳлленчĕкĕн сăн ӳкерчĕкне ярса панă. Акă мĕн çырать вăл асăннă сăн ӳкерчĕк пирки: «Ку вăл Йӳçкасси ял тăрăхĕнчи Актай ялĕнчи Комсомольская урамри пĕве. Пушар сӳнтерме шыв илмелли çак пĕве мĕншĕн никама та кирлĕ мар-ха, мĕншĕн вăл йăлхапа тулса ларнă? Манăн атте Николай Васильевич хăй пурăннă чухне пиччепе пĕрле ăна яланах тасалăхра тытса тăнă, кӳршĕсем унти шывпа усă курнă. Халĕ вара вăл никама та кирлĕ мар иккен. Инкек тавраш сиксе тухсан, шыва ăçтан илмелле пулать-ха?» – ыйтать автор.

Официаллă хуравпа **Йӳçкасси ял тăрăхĕн администрацийĕ** тивĕçтерчĕ. Акă мĕн çырса пĕлтерчĕç вырăнти влаç органĕнчен асăннă çыру пирки:

«Пĕчĕк пĕвесене шыв, тĕпрен илсен, ирригаци каналĕсем тăрăх юхан шывсенчен е çĕр айĕнчи çăл куçсенчен пырса тăрать. Шыв вĕсенчен мĕн чухлĕ интенсивлăрах илсе тăраççĕ, вĕсем çавăн чухлĕ тасарах пулаççĕ. Шыв тăмалли кирек епле вырăн та, вăл шутра чавса тунă пĕве те, кĕске вăхăтрах çыран хĕрринчи ӳсен-тăранпа ӳссе тулса ларать, вырăнĕ ăшăхланса шурлăхланса юлать.

Ялсенче тата хула тулашĕнче пушар сӳнтермелли резервуар шутĕнче ытларах чухне пĕве е кӳлĕ пулса тăрать. Юлашки çулсенче çанталăк типĕ тăнине пула типĕ курăк çунма пултарассин хăрушлăхĕ ӳсрĕ. Çакă пушар сӳнтерме шыв илмелли вырăнсен шутне ӳстерни пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине кăтартса парать.

Актай ялĕнче пурăнакансене пушар хăрушсăрлăхĕпе тивĕçтерес тĕллевпе 2022 çулта пуçарулăх бюджечĕн проекчĕсен конкурсне хутшăнса Октябрьская урамра пушар машинипе шыв илмелли икĕ вырăн йĕркелеме май килчĕ. Çав тĕллевпе пĕтĕмĕшле 500 пин тенкĕ расхутланă. Актай ялĕнчи тасатса хăтлăлатнă пĕвесенче хальхи вăхăтра пушар сӳнтерме шыв çителĕклĕ. Вĕсем шывсăр типпе юлмаççĕ. Мĕншĕн тесен кунти пĕвесене шыв вăйлă çăл куçсенчен пырса тăрать. Хĕл кунĕсенче пĕвесем тĕппе çити шăнмаççĕ.

Маларах асăннă пуçарулăх бюджечĕн программипе Кив Матьăк, Çĕмĕрткасси тата Хурăнкасси ялĕсенче пурăнакансем те усă курчĕç. Асăннă ялсенче пушар машинипе шыв илмелли ятарласа хатĕрленĕ вырăнсене виççĕ йĕркелеме май килчĕ. Çавна валли 1 млн та 680 пин тенкĕ уйăрнă. Уйрăмах Хурăнкасси ялĕнче пурăнакансене палăртса хăварас килет. Ку ялта пурăнакансем чăннипех те пуçарулă. Иккĕмĕш çул ĕнтĕ вĕсем пуçарулăх бюджечĕн программине хутшăнса пушартан сыхланассипе шыв илмелли вырăнсем йĕркелессипе çине тăрса ĕçлерĕç.

Хальхи вăхăтра пушар машинипе шыв илмелли пĕвесене Йӳçкасси ял тăрăхĕн бюджечĕпе кăна ниепле те тума май çук. Кирлĕ мĕнпур ĕçе туса ирттерме вырăнти бюджетра укçа-тенкĕ çитмест. Эсир асăнакан пĕвене тасатса хăтлăлатас тесен, пуçарулăх бюджечĕн проекчĕсен 2023 çулхи конкурсне хутшăнма май пур. Конкурса Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн 2017 çулхи февралĕн 22-мĕшĕнчи «О реализации на территории Чувашской Республики инициативных проектов» йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн ирттереççĕ. Пуçарулăх бюджечĕн программине хутшăнса туса ирттермелли ĕçсене шăпах ĕнтĕ ял çыннисем пĕрлехи пухусенче хăйсем палăртаççĕ».

***«Тӳрĕ ыйту – тӳрĕ хурав» номерĕсем: 62-2-82, 8-927-857-42-06.***

**В. ШАПОШНИКОВ**
**хатĕрленĕ.**

Районти финанс службин историйĕнчен

# Отчетсен «типĕ» цифрисем тата пархатарлă ĕç

Районти финанс службин историйĕ Сĕнтĕр, кайран Муркаш районĕсен аталанăвĕн историйĕпе тачă çыхăннă. Унăн историйĕ иртнĕ ĕмĕрĕн 20-мĕш çулĕсенчех тытăнать. Шел пулин те, архив докуменчĕсенче ун пирки информаци нумаях мар. **1925 çулта Сĕнтĕр финанс инспектор участокĕ Шупашкар уес финанс пайĕ шутне кĕнĕ.** Анчах йĕркеленнĕ Чăваш АССР-ĕнче вĕсем 5 пулнă (Патăрьел, Çĕрпӳ, Шупашкар, Етĕрне тата Çĕнĕ Улатăр). Вăл вăхăтра район бюджетне Шупашкар уес финанс пайĕ çирĕплетнĕ. Фининспектор участокĕ вара çынсенчен, предприятисенчен налук тата тӳлевсем пухассипе, шутласа панă налук суммине учета илессипе ĕçленĕ, патентсем панă, вырăнти бюджет расхучĕсене тӳленĕ. Перекет ĕçĕ, страхласси тата займсем сутасси те финанс пайĕн компетенцийĕнче шутланнă. Вырăнти бюджет райĕçтăвком бюджечĕ ятлă пулнă. Иртнĕ ĕмĕрĕн 20-мĕш çулĕсенчи бюджет уйрăмлăхĕ – бюджета пĕр кварталлăх кăна йĕркелесси тата çирĕплетесси. Каярах бюджета çулталăклăх çирĕплетме тытăннă. Апла пулин те финанс çулталăкĕ календарь çулталăкĕпе пĕр пек пулман, октябрĕн 1-мĕшĕнче пуçланнă. Ĕçлеме квалификациллĕ кадрсем çитменни питĕ палăрнă.

**1927 çулхи октябрь уйăхне район территорийĕнче финанс органĕ хăй тĕллĕн ĕçлеме тытăннă дата теме пулать.** Сĕнтĕр райĕçтăвкомĕн октябрĕн 1-мĕшĕнчи хушăвĕпе 5 çынран тăракан финанс пайĕн штатне çирĕплетнĕ. Районти финанс пайĕн пĕрремĕш заведующийĕ **В.В. Васильев пулнă**, 1929 çулхи февральччен ĕçленĕ.

Иртнĕ ĕмĕрĕн 30-мĕш çулĕсенче Сĕнтĕр финанс пайĕн ĕçĕ пилĕк çуллăх плансемпе палăртнă задачăсене пурнăçлассипе çыхăннă пулнă. Пай специалисчĕсем укçа-тенкĕ куçăмне тĕрĕслесе тăнă, кредит тата страховани ĕçĕсене туса пынă. Кашни ял Совечĕ тăрăх налук агенчĕсем çирĕплетсе тухнă. Агентсем çынсенчен, колхозсенчен, кооперацирен налук пухассишĕн яваплă пулнă. 1938 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне финанс пайĕн штатĕнче 40 çын шутланнă, вăл шутран 25-шĕ – налук агенчĕсем.

Архив материалĕсене пăхас пулсан, пĕчĕк айăпа кĕнĕшĕнех çирĕп айăплав пăхса хунă пулнă. Калăпăр, ял Советĕнчи агент вĕренӳ занятине 10 – 15 минут каярах юлса çитнĕшĕн те (нимĕнле транспорт та пулманнине те шута илер) чи «çемçи» – выговор пама пултарнă. Май килмесен вара ĕçпе те сывпуллашма тивнĕ, ĕçе суда ярса панă. Ĕçрен хăтарма май паракан тивĕçлĕ сăлтав шутĕнчех «пачăшкăпа çыхăну тытни тата ачана чиркӳре ят хуни» шутланнă. Лайăх ĕçшĕн тата укçа-тенкĕ пухмалли плана ирттерсе тултарнăшăн хавхалантарасси часчас пулман. Хавхалантару шучĕпе укçа премийĕ панă тата Мускава Пĕтĕм союзри ял хуçалăх выставкине (каярах – ВДНХ) кайма путевкăпа тивĕçтернĕ.

Вăл вăхăтра налук агенчĕн уйăхри вăтам ĕç укçи 150 – 180 тенкĕпе, районти финанс пайĕн заведующийĕн – 400 – 600 тенкĕпе, налук тата бюджет инспекторĕн, бухгалтерăн – 250 – 350 тенкĕпе, конюх-кучерăн – 140 тенкĕпе, техничкăн 57 тенкĕпе танлашнă. Вăрçăччен техничкăсăр пуçне пур должноçра та арçынсем ĕçленĕ. Вăл вăхăтра финанс пайне **П.С. Кузнецов** (02.1929 – 03.1930), Соловьев (03.1930 – 10.1931), **Евгений Ухов** (1932) ертсе пынă. Чылай вăхăт асăннă должноçра **Антип Калинин** (1932 – 1938) ĕçленĕ. Антип Калинина хыççăн Çĕрпӳ тата Хĕрлĕ Чутай райĕçтăвкомĕсен финанс пайĕсене ĕçлеме янă. Вăл Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăннă. Вăрçă умĕн 1938 – 1941 çулсенче финанс пайĕн ертӳçинче **Михаил Смирнов** ĕçленĕ.

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçлансан опытлă чылай финанс ĕçченĕ фронта тухса кайнă. 1941 çулхи июнĕн 24-мĕшĕнчех Сĕнтĕр райĕçтăвкомĕн финанс пайĕн 18 ĕçченне Хĕрлĕ Çар ретне мобилизациленĕ. Йышĕпе чакнă пай çине фронт ыйтăвĕсене татса парас тата хушма тупăш çăлкуçĕсене шырас ĕçсем хушăннă. Çĕршывшăн йывăр çак тапхăрта финанс пайĕнче ĕçлеме хĕрарăмсене тата хĕрсене те явăçтарма тытăннă. Çав шутра – эвакуаци майĕпе района килсе кĕнисене те. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин çулĕсенче финанс пайне **Гаврил Коротков, Иван Патеев, П.Г. Гаврилов, Порфирий Чумаков, Степан Гаврилов** ертсе пынă.

1944 çулхи февральте Муркаш районне йĕркеленĕ хыççăн мартăн 23-мĕшĕнче район депутачĕсен пĕрремĕш йĕркелӳ сессийĕнче халăх депутачĕсен Муркаш район ĕçтăвкомĕн структурине çирĕплетнĕ. Ун шайĕнче финанс пайне те туса хунă. Заведующийĕ пулма **Филимон Абрамова** çирĕплетнĕ. 1945 çулта асăннă должноçа **Михаил Смирнов** йышăннă. Вăл 1950-мĕш çулсен пуçламăшĕччченех финанс пайне ертсе пынă. Кайран ку ĕçе **Николай Свешников** тăснă. Каласа хăвармалла, финанс пайĕн тивĕçĕ шутĕнче ун чухне патшалăх валли аш-какай, сĕт, çу, çăм, çăмарта, çĕр улми пухасси те пулнă. 1958 – 1963 çулсенче финанс пайĕн ертӳçинче **Иван Сычев тăрăшнă.**

Тĕрлĕ çулхи бюджета тишкернĕ май, патшалăх тата общество аталанăвĕн историне те тĕпчеме пулать. Çулталăк отчечĕсен цифрисенче патшалăх политики, унăн тĕллевĕсемпе задачисем уçăмлă палăраççĕ. 1920 – 1930-мĕш çулсенчи дефицитлă бюджетăн тĕп тĕллевĕ район пурнăçне йĕркене кĕртесси, больницăсен, фельдшер пункчĕсен, магазинсен, мунчасен, вулав çурчĕсен ĕçне йĕркелесси, шкулсене юсасси пулнă. Ытларах укçа-тенкĕне халăх вĕрентĕвĕ (40 – 45 процент), сывлăх сыхлавĕ (11 – 15 процент) валли уйăрнă. Бюджет шучĕпех районти агрономи, зоотехнипе ветеринари сечĕсене, коммуналлă хуçалăха тытса тăнă, общеcтвăлла йĕркелĕхе тивĕçтернĕ, пенсисемпе пособисем тӳленĕ.

Советсен тапхăрĕнче бюджет дефицитсăр тата тăнăç пулнă. Укçа-тенкĕ дотацисенчен, налуксемпе тӳлевсенчен, çынсен тупăш тата ял хуçалăх налукĕсенчен пухăннă. Тĕп тӳлевçĕсем вара ял хуçалăх тата промышленноç предприятийĕсем, потребкооперации организацийĕсем пулнă.

Отчетсен «типĕ» цифрисенче – чăннипех те профессионалсен, ăста та пултаруллă специалистсен ĕçĕ-хĕлĕ. Хăйĕн пĕтĕм ĕç ĕмĕрне тенĕ пекех Нина Тихонова финанс пайĕн бухгалтери службине ертсе пынă. Хыççăн унăн ĕçне хăйĕн вĕренекенĕсем Л.В. Тимофеева, Л.В. Мастерова тăснă.

Шанса панă ĕçшĕн яваплăха çирĕп туяссипе В.И. Григорьев палăрса тăнă. 1973 – 1987 çулсенче вăл пайăн контролер-ревизорĕнче тăрăшнă. Кун пек ĕçченсен шутĕнчех – бюджета налуксем пырса тăрассине тивĕçтерессин сферинче чылай вăхăт вăй хунă П.Я. Яковлев, Г.В. Ермолаев, М.В. Илларионов, Г.Ф. Скворцов, бюджет енĕпе аслă инспектор пулнă Н.В. Васильев.

Финанс органĕсем ăста кадрсем хатĕрлессипе яланах малти ретре пулнă. Акă Х.М. Тимофеева хăйĕн ĕç биографине финанс пайĕнче пуçланă, ял хуçалăх отраслĕшĕн яваплă пулнă. Хăйĕн ĕçри пултарулăхĕпе палăрса, кайран вара чылай вăхăт РФ Перекет банкĕн Муркаш районĕнчи уйрăмне ертсе пынă. В.С. Ярикова, Г.Т. Дмитриева тата ыттисем асăннă системăра чылай вăхăт тăрăшса районти финанс системин пурнăçĕнче ырă ят хăварнă. Пай пуçлăхĕн çумĕ Н.А. Данилова отраслĕ 1992 çултанпа тăрăшать, хăйĕн ĕçне тата профессине чăннипех парăннă çын. Ж.В. Ефимован, В.Н. Фоминан, Н.М. Ланцеван ĕç тата практика опычĕ пĕчĕк мар. В.М. Кириллова, И.Г. Белова та финанс пайĕнче чылай çул ĕçленĕ. Чылайăшĕ район тата республика шайĕнчи наградăсене тивĕçме пултарнă.

Тĕрлĕ çулта районти финанс пайне ертсе пынисем уйрăм тав сăмахне тивĕçлĕ. Финанс органĕсенчи служба вĕсемшĕн пĕтĕм пурнăç тĕллевĕ пулса тăнă. Пирĕнтен вăхăтсăр уйрăлса кайнисене – çутă астăвăм, пурăнаканнисене – хисеп те мухтав. Иртнĕ çулсенче районти финанс пайне чăн-чăн профессионалсем, мал курăмлă ертӳçĕсем ертсе пынă. Вĕсенчен кашниййĕнех хăйĕн ĕç стилĕ пулнă, финанс органĕн пурнăçĕнче кашниех хăйĕн йĕрне хăварнă. Район экономики аталанса çирĕпленнисе пынинче вĕсен тӳпи те çук мар.

13 çул – 1964 çулхи мартран тытăнса 1977 çулхи июньччен – халăх депутачĕсен Муркаш район Совечĕн финанс пайне опытлă финансист **Георгий Григорьев** ертсе пынă.

Сакăр çула яхăн – 1977 çулхи июньрен пуçласа 1985 çулхи февральччен – финанс пайĕн ертӳçинче **Геннадий Леонтьев** тăрăшнă. Элĕк районĕнче çуралнăскер, пирĕн района Чăваш АССР Финанс министерствин направленийĕпе лекнĕ. Чылай çул вăл райплан председателĕ, ĕçтăвком членĕ пулнă, пенсие тухиччен районти пенси службине ертсе пынă. Геннадий Леонтьев районти финанс отраслне пахалăхлă çĕнĕ шая çĕклеме пултарнă. Вăл финанс пайне ертсе пынă тапхăрта вĕрентсе хатĕрленĕ специалистсем каярахпа республика тата федераци структурисен ертӳçисенче ăнăçлă ĕçленĕ.

1985 çул тăршшĕпе тенĕ пекех финанс пайĕн ертӳçинче **Елена Степанова** ĕçленĕ. Хыççăн вăл хăйĕн ĕç биографине Чăваш Республикин Финанс минстерствинче тăснă.

1986 çулхи февральте финанс пайĕн ертӳçи пулма **Нина Константиновăна** шаннă (финанс системинче 1975 çултанпа). Вăл пая 1995 çулччен ертсе пынă. Ку тапхăр перестройкăпа, Совет Союзĕ саланнипе, экономика çыхăнăвĕсем арканнипе паллă. Çавна май 1990-мĕш çулсенчи финансистсен пысăк ăсталăхпа вăй хума, тепĕр чухне проблемăсене тĕрлĕ йышăну туса татса пама тивнĕ. 1995 – 2005 çулсенче Нина Константинова Федераци казначействин Муркаш районĕнчи уйрăмĕн ертӳçи пулнă, 2005 – 2016 çулсенче Федераци финанспа бюджет надзор службин Чăваш Республикинчи территори управленине ертсе пынă. Ĕçри хастарлăхшăн Чăваш Республикин, Федераци казначействин Хисеп грамотисене, РФ Финанс министерствин Тав çырăвне, кăкăр çине çакмалли «Отличник финансовой работы» паллăна, Раççей Федерацийĕн тава тивĕçлĕ экономисчĕн ятне тивĕçнĕ. Вăл – экономика наукисен кандидачĕ, доцент.

**Валентина Иванова** хăйĕн пурнăçĕн 36 çулне районти финанс органĕсенчи ĕçне халалланă. Аслă экономистран тытăнса 1995 çулта район администрацийĕн финанс пайне ертсе пыма тытăннă. Вăл ертсе пынипе финанс пайĕ бюджета казначейство системипе пурнăçласси çине куçнă, тĕрлĕ реформăна чăтса иртнĕ. Халĕ ĕçлекен чылай финансист ăна чăннипех хăйĕн учителĕ, ăста наставникĕ тесе шутлать. Нумай çул тăрăшса вăй хунăшăн Валентина Иванова кăкăр çине çакмалли «Отличник финансовой работы» паллăна, ытти нумай патшалăх тата ведомство наградине тивĕç пулнă.

Хальхи вăхăтра Муркаш район администрацийĕн финанс пайĕнче **Рената Ананьева** ертсе пыракан туслă та çирĕп коллектив ĕçлет. Пай штатĕнче 10 специалист, пурте аслă пĕлӳ илнĕ. Коллектив çамрăк темелле, вăтам ўсĕм 39 çулпа танлашать. Кашниех харпăр хăйĕн вăхăтне пăхмасăр пĕрлехи ĕçшĕн чунне парса тăрăшать. Юлашки 15 çул хушшинче пирĕн куç умĕнчех тата эпир хутшăннипе бюджетра, ĕç стилĕпе мелĕсенче тăтăклă улшăнусем пулса иртрĕç. Финанс органĕ вырăнти хăй тытăмлăх органĕ шутне куçрĕ. Çĕнĕ бюджет классификацийĕ йăлана кĕчĕ – çӳхе кăна брошюрăран вăл статьясене, пайсене, разделсене пĕрлештерекен том пулса тăчĕ.



Пурнăç кăларса тăратакан хальхи требованисемпе килĕшӳллĕн ĕçлесе пырса, финанс пайĕ хăйĕн ĕçĕнче уйрăм çитĕнӳсем тума пултарчĕ. Пĕтĕм Раççейри 15 çул хушши иртерекен «Лучшее муниципальное образование России в сфере управления общественными финансами» конкурса 11 хутчен хутшăнса, Муркаш районĕ 7 хутчен тĕрлĕ номинацире çĕнтерӳçĕ тата призер наградисене тивĕçме пултарчĕ.

Тупăшсем ўссе пыни юлашки çулсенче район территорине хăт кĕртессипе туса иртерме палăртнă ĕçсене пурнăçа кĕртме май пачĕ. Учреждениесенче кулленхи тата капиталлă юсав ĕçĕсем калăпăшлă пулса пыраççĕ, тĕрлĕ программа пурнăçланать, социаллă программăсемпе усă курса чылай çемье пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатать.

Планпа килĕшӳллĕн, «Электронный бюджет» концепцие пурнăça кĕртсе пынă май, муниципалитет йĕркеленĕвĕсен бюджечĕсене тăвассипе тата пурнăçлассипе çыхăннă информаци анлăшне интеграцилессипе ĕçсем пыраççĕ. Паян та, яланхи пекех, финанс пурнăçĕ вĕресе кăна тăрать. Апла пулин те çĕршыв аталанăвĕн хальхи тапхăрĕнче те финанс ситемин задачисем унчченхисемех юлаççĕ: тупăш ытларах пухасси, унпа тĕллевлĕ тата эффективлă усă курасси, патшалăх интересĕсене сыхлассин, çĕршывăн экономика хăрушсăрлăхне тивĕçтерессин тата малалла аталанма май туса парассин задачисене мала кăларасси. Улшăнусем вара, чи малтанах – информацие ĕçлемелли çĕнĕ технологисене ĕçе кĕртсе пыма, вĕсен шанчăклăхĕпе тĕрĕслĕхĕн шайне ўстерме май паракан çĕнĕ технологисенче.

Финанс тата шут ĕçĕн хисеплĕ ĕçченĕсем, çак ĕçĕн ветеранĕсем! РФ Финанс министерствине йĕркеленĕренпе 220 çул çитнĕ ятпа тата сентябрьте уявлакан Финансист кунĕ ячĕпе сире чĕререн саламлатăп. Сывлăхăр çирĕп пултăр, ума лартнă тĕллевĕрсем пурнăçланса пычăр, çемйĕрсенче яланах тату пурнăçпа килĕшӳ хуçаланччăр.

**Р. АНАНЬЕВА,**
**Муркаш район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ – финанс пайĕн пуçлăхĕ.**

**Хушса калани.** ***Сентябрĕн 9-мĕшĕнче Шупашкарта Финансист кунне тата Раççей Финанс министерствине йĕркеленĕренпе 220 çул çитнине халалласа савăнăçлă мероприяти иртнĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ – финанс пайĕн пуçлăхĕ Рената Ананьева ертсе пынипе унта Муркаш район делегацийĕ те хутшăннă.***

***Мероприятире çавăн пекех «Бюджет для граждан» проекчĕсене хатĕрлессипе иртнĕ конкурс çĕнтерӳçисене чыслань. Асăннă конкурсра Муркаш район администрацийĕн финанс пайĕ çĕнтернĕ. Кунсăр пуçне финанс пайĕн тĕп эксперт специалисчĕ Алина Васильева «Лучший молодой специалист финансовой сферы Чувашии» конкурсра 2-мĕш вырăн йышăнма пултарнă. Çавăн пекех Алина Васильева Чăваш Республикин финанс министрĕн Тав çырăвне те тивĕç пулнă.***

Вырсарникун – Вăрман ĕçченĕсен кунĕ

# Яваплăха кашнин туймалла

***Тăван ен илемĕ пирки сăмах хускатсан куç умне чи малтан ял çывăхĕнчи вăрман тухать. Вăл – çут çанталăкри таса сывлăш бассейнĕ. Çапла вара вăл çын пурнăçĕ çине мĕнле витĕм кӳни каламасăрах паллă. Çитес вырсарникун вăрман хуçалăхĕнче ĕçлекенсем хăйсен професси уявне паллă тăвĕççĕ. Çавна май эпир паян хамăр тĕпеле Ильинка лесничествин лесничине В. ВАСИЛЬЕВА чĕнтĕмĕр.***

***– Владислав Витальевич, вăрман ӳстересси тата ăна сыхласси çине çĕршыв пысăк тимлĕх уйăрать. Пирĕн район территорийĕнче те унăн лаптăкĕ пĕчĕк мар. Çапла вĕт?***

– Калаçу пуçламăшĕнче район çыннисем вăрманпа туслă çыхăну тытнине палăртатăп. Вĕсем хушшинче çуркуннепе кĕркунне йывăç лартма юратакансем йышлă. Çавăнпа вăрман лаптăкĕ те пĕчĕк мар. Кунпа пĕрлех таврари çут çанталăка хисеплесси, упрасси, унăн илемĕшĕн тăрăшасси пĕрлехи ĕç пулнине те кашниех пĕлет. Ку – ырă пулăм, анчах паян вăрман тирпейлĕхĕ вăрманçă ĕçленипе çеç пулса пыманнине пурсăмăрăн та ăнланмалла. Çавăн чухне çеç тирпейлĕ вăрман пирĕн пурнăç илемĕ, канмалли меллĕ вырăн пулса тăрĕ: хĕрӳ ĕç хыççăн унта усăлла çӳресе вăй пухма, туллин канса илме май пулĕ. Республикăра вăрмансем пĕтĕмĕшле 630 пин гектар ытла йышăнаççĕ. Ку вăл – пĕтĕм территорин 3-мĕш пайĕ. Хамăр лесничествăна илсен, пирĕн тăрăхри хутăш вăрмансем паян 10 пин ытла гектар çинче кашласа лараççĕ. Çак лаптăкри вăрмансене пăхса-сыхласа тăракансене, çак ĕçе хăйсен пурнăçне халалланă ветерансене, вĕсен çемье членĕсене, вăрман аталанăвне пысăк тӳпе хывакан шкул ачисене Вăрман ĕçченĕсен кунĕпе саламлатăп, телей те ăнăçу сунатăп, малашне те пĕр йышра пулса тĕллевлĕ ĕçлессе шанатăп.

***– Вăрман пысăк лаптăк йышăннине ырламалла. Ăна пăхса тăрасси пĕртте çăмăл ĕç пек туйăнмасть. Ку ыйтупа мĕнле ĕçлесе пыратăр? Унччен пулнă икĕ лесничество паян пĕр тытăмра пулни хушма йывăрлăхсем çуратмасть-и?***

– Вăрман ĕçĕ нихăçан та çăмăл пулман. Ильинка вăрман хуçалăхне РФ вăрман хуçалăх агентствин 2009 çулхи нарăс уйăхĕн 3-мĕшĕнчи приказĕпе Ильинка тата Малиновка лесничествисене пĕрлештерсе туса хучĕç. Ун хыççăнхи вăхăтра вăрман хуçалăхĕнче çĕнĕлĕхсем те самай пулчĕç. Паян пирĕн тытăмра вăрмана сыхлакан, хӳтĕлекен тата пăхса тăракан орган пур, уйрăм производство участокĕ ĕçлет. Вăрмана сыхлассипе, хӳтĕлессипе тата пăхса тăрассипе пĕрремĕш çул мар эпĕ яваплă пулсан, производство участокне паян А. Миихайлов ертсе пырать. Эпир республикăри Сăнавлă вăрман хуçалăх тытăмне кĕретпĕр. Пирĕн тăрăхра ытларах çулçăллă вăрман ӳсет. Районта пурăнакансем вăрман лартассипе, тăван ене юратассипе ытти сенчен тăрăшуллă пулни паллă. Çакă пире татах та пуçарулă пулма хистет. Ăна ăнланса юлашки çулсенче пĕрлехи тăрăшулăхпа вуншар гектар йывăççем лартрăмăр, вăрмансене тасатса çамрăк йывăççене ӳсме май туса патăмăр. Лесничествăра ятарлă машинăпа пушар хуралне йĕркелени те пире паян хамăр вăрмансенчи хăрушсăрлăха тивĕçлĕ шайра тытса пыма пулăшать.

***– Вăрман пурнăçĕн хăйĕн истори. Уяв умĕн унăн страницисене те уçса пăхмăпăр-и? Ăна тишкерсе тата тунă ĕççене пĕтĕмлетсе ырă сăмах каламалли те пурах ĕнтĕ.***

– Çапла. Вăрман хуçалăхĕ пĕччен-иккĕн ĕçленипе аталанса пырайманни аваланпах паллă. Хамăр енри кашни вăрманçă хăй вăхăтĕнче тăван тавралăх илемĕпе хăчĕшĕн, унăн пуянлăхĕшĕн епле ĕçленине эпир асрах тытатпăр. Вĕсен ĕçĕ пирĕн куç умĕнче. Юманлăхсем лартса чĕртессипе çанă таварса тăрăшнă А. Селюшкин, В. Анисов, Н. Пантелеймонов, И. Игнатьев, С. Николаев, Г. Флегонтов вăрманçăсем таврари ялсенче тата район пурнăçĕнче хăйсенчен ырă ят хăварчĕç. Хыççăнхи çулсенче вăрман хуçалăхĕнче тĕрлĕ ĕçре вăй хунă В. Голубев, В. Колбасов, М. Моисеев, Л. Николаев, П. Андреев, В. Таймаскин, Н. Щербаков, В. Николаев тата Б. Хрусталев хăйсен тăрăшулăхĕпе вăрман хуçалăхĕн ячĕ-сумĕ пулса тăчĕç. Паян та кунта тимлекен А. Зайцев, М. Никитин, А. Михайлов аслă ĕçтешĕсен ĕçне малалла тăсассипе ырми-канми ĕçленине ăруран ăрăва пыракан ырă пулăм тесе палăртса хăварас килет.

Умра – йывăç лартмалли черетлĕ тапхăр. Район çыннисем унта кăçал та активлă хутшăнĕç тетĕп. Кунпа пĕрлех тăван ен илемĕ хамăр алăра пулнине шута хурса вăрмана канма тухакансем хăйсем хыççăн кану вырăнĕсене тирпейлесе хăварасса, çав вырăна канма пыракан тепĕр ушкăнăн пит хĕретмелле пулмасса шанатăп.

**А. БЕЛОВ калаçнă.**

# Ял çыннине – пулăшу

***Ĕнесене киле тухсах искусственлă майпа пĕтĕлентересси пирĕн вулакансемшĕн интереслĕ пулнине шута илсе эпир паян хамăр тĕпеле вылăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станцин ертсе пыракан ветврачне Светлана БЕЛОУСОВĂНА чĕнтĕмĕр.***

**– Ялта пурăнакансен харпăрлăхĕнче ĕнесем сахал мар. Юлашки çулсенче ял çыннишĕн вĕсене вăхăтра пĕтĕлентересси пысăк ыйту пулса тăчĕ. Мĕн сĕнме пултаратăр вĕсене?**

– Ыйту кун йĕркинче чăнах та çивĕч тăрать. Юлашки çулсенче вылăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станцин ветеринари участокĕсен специалисчĕсем тата хамăр тăрăхри уйрăм осеменаторсем ĕнесене киле тухса пĕтĕлентерессине пурнăçа кĕртрĕç. Вĕсенче ĕçсене пысăк пахалăхлă пурнăçлама паян пур хатĕр те çителĕклĕ, ĕнесене пĕтĕлентерессипе опытлă специалистсем ĕçлеççĕ. Çак пулăшупа ял çыннисем туллин усă курма пуçларĕç.

**– Ĕнесене искусственлă майпа пĕтĕлентернин уссине эсир мĕнре куратăр?**

– Сăмахăма патшалăх шайĕнче халăх сывлăхĕ çине тимлĕ пăхма пуçланинчен тытăнам. Ĕнесене вăкăрсемпе пĕтĕлентерни ар çыхăнăвĕ урлă сарăлакан чирсене çул парать. Ку çул килти хушма хуçалăх тытакансене чирленĕ ĕнесене сыватас тĕлĕшпе пысăк тăкак кӳрет. Çакă пулас пăрăвăн сывлăхĕпе аталанăвĕ çине те витĕм парать. Кунсăр пуçне чирлĕ ĕнен сĕт-турăхне çиесси те ыйтуллă пулса тăрать. Çав вăхăтрах ĕнесене искусственлă майпа пĕтĕлентернин тĕллевĕ – кашни ĕнене пăруланă хыççăнхи пĕрремĕш уйăхрах тухăçлă пĕтĕлентерсе хăварасси, ĕнесем хĕсĕр юласран сыхласси. Практика кăтартнă тăрăх, ĕнесене искусственлă майпа пĕтĕлентерсен общественлă секторта та, килти хушма хуçалăхра та пăру илессипе кăтартусем лайăхланаççĕ. Кун пек чух селекципе ăратлăх ĕçĕ те çӳллĕ шайра пулса пырать. Продукци пахалăхĕ те ӳсет. Çакă вылăхсен паха енĕсене малалла аталантарма май парать.

**– Светлана Владимировна, ĕнесене искусственлă майпа пĕтĕлентерме мĕнле вăрлăхпа усă куратăр? Вылăхăн ăратлăх пахалăхĕ кунашкал чух мĕнле шайра пулать?**

– Хушма хуçалăхри ĕнесене киле тухса искусственлă майпа пĕтĕлентерме районта тĕрлĕ ăратлă вăкăр вăрлăхĕпе усă куратпăр. Тĕрĕсленĕ çак вăрлăха ăратлăх ĕçĕпе тимлекен «Чувашское» уçă акционер обществинчен туянатпăр. Вĕсен пахалăхĕ пирки унччен хиллех иккĕлену çук.

**– Ял çыннишĕн пĕлтерĕшли – ĕç хакĕ. Ĕнесене искусственлă майпа пĕтĕлентерессин технологийĕпе тата çак ĕçĕн хакĕ çинче кĕскен каласа парăр-ха?**

– Ыйтăвăн кăсăклăхне ăнланатăп. Анчах кунта хуравĕ те кашниншĕнех интереслĕ. Ĕнесене искусственлă майпа пĕтĕлентерессине, ытти сем пекех, эпир те ирпе тата каçпа пурнăçлатпăр. Çак ĕçĕн хакĕ те вăрттăнлăхра мар. Вăл пару-тăрăва кура 2000 тенкĕпе танлашать.

Пĕлтĕр пирĕн районти осеменаторсем вăхăтра пулăшнипе ĕнесене искусственлă майпа пĕтĕлентерессипе нумай ĕне хуçи тĕллевлĕ те вăхăтлă усă курма пултарчĕ. Çывăх уйăхсем шăпах ĕнесене пĕтĕлентермелли вăхăт пулнăран ĕç кăтартăвĕсем кăçал та пĕчĕк пулмасса шанатăп. Çитменнине эпир хамăр алăра пулнă ĕнесем сывă пулнине тата пĕтĕленнине тĕрĕслессине те ĕçлетпĕр. Ял çынни çакă пĕлтерĕшлĕ пулнине ăнланать тесе шутлатăп.

**– Тавах усăллă калаçушăн.**

– Килти хушма хуçалăхĕсенче ĕне е тынашка тытакансене вĕсене пĕтĕлентерме вăхăт çитсен тата çак ыйтăва татса пама йывăрлăхсем тухса тăрсан пирĕнпе çыхăнма ыйтатăп. Эпир хамăр автомашинăпах сирĕн патăра вăхăтра çитĕпĕр.

**А. БЕЛОВ калаçнă.**

Турра ĕненекенсем валли

# 93 çултан чан сасси янăрама пуçларĕ



Кăçалхи Мăнкунра – апрелĕн 24-мĕшĕнче – Муркашра Владимирти Турă Амăшĕн кĕлĕ çуртĕнче унченхи чиркӳ çунса кайнă хыççăн 93 çул иртсен чан сасси илтĕнчĕ. Турра ĕненекенсем çакна ырă ĕçсен пуçламăшĕпе, чиркӳ аталанăвĕ çĕнĕ шая çĕкленнипе, район цетрĕнче çĕнĕ чиркӳ пулассипе çыхăнтараççĕ. Çавна валли сăлтавĕ те пур – кăçал Муркашра çĕнĕ чиркӳ тума хатĕрленесси пуçланчĕ.

Çĕнĕ чиркӳ тенĕрен. Муркаш чиркĕвĕн историйĕ пысăк та пуян. Вăл çĕршыв аталанăвĕн тĕрлĕ тапхăрне чăтса иртнĕ. Анчах ку тăрăхра пурăнакансем Муркаш чиркĕвне нихăçан та манăçа кăларман.

Район центрĕнчи чиркӳ историйĕ пирки. Вăл 18 ĕмĕр вĕçĕнче Муркашра ĕçленĕ йывăç часавньăран пуçланать. Вăл Турра ĕненекенсемшĕн хăтлă та илемлĕ пулни паллă. Унта тăтăшах Тихвински Турă Амăшĕн уявĕ умĕн пысăк служба иртнĕ. Çавăнпах 1881 çулта Турра ĕненекенсен укçи-тенкипе тума пуçланă чиркĕве те вăхăт çитсен Тихвински Турă Амăш чиркĕвĕ тенĕ. Икĕ çул хушшинче çĕкленнĕ чиркӳре икĕ престол пулнă: тĕп престол – Тихвински Турă Амăш ячĕпе тата сылтăм енпе – Христос Туррăмăр çуралнă ятпа.

Чиркĕве кирпĕч фундамент çине йывăçран туса лартнă. Территорие йывăç карта тытса çавăрнă. Тĕп храмри Турăшсене икĕ ретпе вырнаçтарнă. Чиркĕвĕн çĕр пулман, анчах ун çумĕнчи библиотекăра 300 яхăн кĕнекепе журнал пулни паллă. Чиркӳ çумĕнче прихут шкулĕ ăнăçлă ĕçленĕ. 1889 çулта унта 28 арçын ача вĕреннĕ.

Тихвински Турă Амăш чиркĕвĕнче ĕçлекенсем çителĕклех пулнă, анчах вĕсем тăтăш улшăнса тăнă. 1886 çултан пуçласа 1929 çулччен чиркӳри службасене 1853 çулта çуралнă Алексей Аристов вырăс пачăшки иртернĕ. Чиркӳ аталанăвне те вăлах йĕркелесе пынă. Алексей Иванович вырăнти çынсем вырăсла пĕлменрен хăй чăваш чĕлхине вĕренсе службăсене пысăк пайне чăвашла, чиркӳ-славян чĕлхипе иртернĕ.

1929 çулта Муркашри чиркӳ тĕппипех çунса кайнă. Çулăмра нумай документ тата чиркӳ библиотеки кĕленнĕ. Çак инкек хыççăн чиркӳ ĕçне лайăх пĕлекен Алексей Аристова Юнкă чиркĕвне кĕлĕ тума çӳрекенсем хăйсем патĕнче служба иртерме чĕннĕ. Турра çирĕп ĕненнĕ тата çак пĕлĕве халăх хушшинче сарассишĕн ырми-канми тăрăшнă Алексей Иванович хирĕç пулман. 1929 çулхи декабрĕн 1-мĕшĕнче тата 4-мĕшĕнче вăл унта службасем иртернĕ. Юнкă чиркĕвĕн престол уявĕнче вăл чиркĕве пынисене çапла каланă: «Турра ĕненекенсем, антихристсене ан итлĕр, вĕсем нихăçан та çиеле тухаймĕç. Турра ĕненессине хавшатнă вăхăтра ăна çĕнĕ вăй парассишĕн тăрăшмалла. Антихристсем чиркĕве хупасшăн, анчах Турă хăйне ĕненекенсене тĕрĕс çултан пăрса яма памĕ. Пур влаç та Турăран. Турра хирĕç тăракан влаçăн кунĕсем кĕске пулĕç. Çакна асра тытса Турă саккунĕсемпе пурăнăр».

Декабрĕн 1-мĕшĕнче А. Аристов Турра ĕненекенсене Юнкă чиркĕвне хупассине хирĕçлесе хăйсен сĕнĕвĕсене çырма хут валеççе парать. Декабрĕн 4-мĕшĕнче сĕнӳсене хума уйăрнă ещĕкре пур хут çине те «Турра ĕненетĕп тата эпĕ – Тĕншĕн» тесе çырнă хутсем пулаççĕ. Çакна «Советсене хирĕçле контрреволюцилле характерлă агитаци» тесе Алексей Ивановича арестлеççĕ, Шупашкарти ĕçлесе юсанмалли çуртра вырнаçтараççĕ. 7 ывăлпа пĕр хĕр ашшĕ хăйне пĕрре те айăплă тесе шутламан, айăпа йышăнман. Ун тĕлĕшпе хатĕрленĕ приговорта çапла çырни пур: «Следстви материалĕсемпе советсене хирĕçле унăн ĕçне туллин çирĕплетеймен. Суд тенкелĕ çине лартнă 76 çулхи арçынна суд залĕнчех ирĕке кăлармалла».

Хыççăнхи пурнăçра Муркашри çунса кайнă чиркĕве чĕртесси самантлăха та кун йĕркинчен тухман. 1998 çулта пулас чиркӳ вырăнне Варнава митрополит çутатнă. Çав кĕлĕре Чăваш Республикин пĕрремĕш Президенчĕ Николай Федоров тата Шупашкар хулин мэрĕ Анатолий Игумнов пулнă. Çакăн хыççăн пулас чиркĕвĕн пĕр кĕтесне купалама пуçланă, хĕреç лартнă...

Куратпăр, пуçăннă ырă ĕç нумайлăха тăсăлса кайрĕ. Хыççăнхи çулсенче вырăнти активистсем тăрăшнипе чиркӳ кил хушшине йывăç пӳрт куçарса килсе кĕлĕ çурчĕ уçма май килчĕ. Кĕлĕ çуртне Владимирти Турă Амăшĕн уявĕнче уçма май килнĕрен ăна çав ятпа уçрăмăр.

Владимирти Турă Амăшĕн кĕлĕ çурчĕ ыранхи кунпа пурăнать. Кунти ĕçсене халĕ Михаил атте йĕркелесе пырать. Вăлах чиркĕве çӳрекенсемпе службасем иртерет. 93 çул иртсен кĕлĕ çурчĕ çумĕнче халăхран пуçтарнă укçа-тенкĕпе çичĕ чан туянса вырнаçтарчĕç. Пысăкки – 50 кг, пĕчĕкки – 4 кг. Вĕсем паян служба пуçланнă вăхăтра та, Евангели вуланă чухне те, черетлĕ кĕлĕ вĕçленсен те чиркĕве çӳрекенсене тав тунăн уçă сасă параççĕ.

**Л. ПОЛИКАРПОВ.**

# Вак чул сарнипех çул юсанмасть

Пăхса тăракан организаци «çула юсанă», шăтăк-путăка вак чул сарса тикĕсленĕ. РФ Административлă майпа право йĕркине пăснин кодексĕпе килĕшӳллĕн, çул çинчи çӳреме чăрмантаракан япала çула варалани шутланать. Кун пек юсав çул çӳреме ятарласа чăрмав туса хуни шутне кĕрет. Халăх фрончĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕ автомобиль çулĕн Муркаш районĕнчи участокĕнче хăрушсăрлăха тивĕçтерме ыйтать.

«Муркаш – Турай – «Сура» автомобиль çулĕ вырăнта пурăнакансене пĕрремĕш çул мар ĕнтĕ пусăсене ыраттарать. Çул ванса пĕтнĕ, шăтăк-путăкланса кайнă. Ун тăрăх йĕркеллĕ хăвăртлăх режимĕпе çӳреме май çук. Халăх фрончĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕн активисчĕсем палăртнă тăрăх, чылай çул ĕнтĕ çула пачах юсаман. Тĕрĕссипе вара çакă çул харпăрçин – Муркаш район администрацийĕн – тӳрĕ тивĕçĕ.

Çула тĕпрен юсама тахçанах вăхăт çитнĕ ĕнтĕ. Ку ĕçсен тапхăрне пĕр хут кăна мар каялла куçарса пынă. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ нумаях пулмасть йышăну тунă тăрăх, тахçантанпах кĕтнĕ юсав ĕçĕсем çитес çул пуçланмалла, 2024 çулта вĕçленмелле. Çавна валли пĕтĕмĕшле 22 млн тенкĕ ытла республика бюджетĕнчен тата 215 млн тенкĕне яхăн федераци бюджетĕнчен уйăрĕç. 2020 çулта проектла смета документацийĕ тума пуçланă. Анчах та ку контракта пăрахăçланă. Юсав ĕçĕсене тытăнмалли вăхăт çитсе килет пулин те, урăх проект хатĕрлесси пирки Госзакупки системинче пĕлтермен. Кун пек факт капиталлă юсав ĕçĕсене вăхăтра ирттересси пирки иккĕленӳ çуратать.

Апла пулин те çула йĕркеллĕ шайра тытса тăма тивĕçлĕ. Каласа хăвармалла, çула пăхса тăракан организаци икĕ çул каялла «Сура» автомобиль çулĕнчен тытăнса Анаткасси патне çити çул участокĕ çинче шăтăк-путăка саплана. Тĕрĕссипе, питех те хăйне евĕр. Темиçе автомашина вак чул тиесе килнĕ те асфальт тăрăх сарса тухнă. Тĕрĕсрех каласан, юрлă-пăрлă çул çине. Мĕншĕн тесен, вырăнта пурăнакансем каласа панă тăрăх, «юсав ĕçĕсене» çĕнĕ çул уявĕсем умĕн туса ирттернĕ.

Хĕлле кун пек çул тикĕс пулма пултарать тейĕпĕр (таптанса хытнă юра пула). Çулла тата кĕркунне-çуркунне вара автомобилистсемшĕн чăн-чăн тамăк пуçланать. Гранит чул ванчăкĕ асфальт ăшне ниепле те путăнса ларасшăн мар. Автомобилистсен вара кун пек çулпа уйрăмах асăрханса çӳреме тивет. Хăвăртрах çӳреме май çук. Мĕншĕн тесен умĕнчи автомашина кустăрми айĕнчи чул хыççăн килекенни çине лекме пултарать. РФ административлă майпа право йĕркине пăснин кодексĕпе килĕшӳллĕн вара çул çинче çӳреме чăрмантаракан япала çул çине вараланин шутне кĕрет. Çавăнпа та кун пек «юсав» çул çӳреме ятарласа чăрмав туса пани пулса тăрать.

Апла пулсан çула пăхса тăракан организаци кодекса кăна мар, юсав ĕçĕсен технологине те пĕлмест пулмалла. Вак чулпа пысăк мар шăтăк-путăка саплама кăна усă курма тивĕç вĕт-ха. Çитменнине вак чула кун пек шăтăк-путăкра битум ярса çирĕплетмелле, ăна асфальт тăрăх сапаласа тухмалла мар. Халĕ кун пек çул çинче вак чула пула çулла шăтăк-путăка саплама тата разметка тума та, хĕлле юра тасатма та май çук. Шăтăк-путăкĕсем вара пысăклансах пыраççĕ. Халĕ Штранкă юхан шывĕ патне аннă çĕрте юр ирĕлнĕ шыв тата çумăр шывĕ юхнипе 25 сантиметр тарăнăш, çур метр сарлакăш çуракăсем пулса тăнă!

«Çула пăхса тăрассипе туса ирттернĕ ĕçсем проблемăна татса пама мар, ăна çивĕчлетнĕ кăна. Ăссăрла хăтланса вак чул сапалани автомашинăсен хăвăртлăх режимне чакарать, йĕркеллĕ çӳреме чăрмантарать. Вăл шутра ятарлă службăсен – васкавлă медицина пулăшăвĕн, пушар, полици автомашинисене те. Çула çывăх вăхăтрах тасатассин, шăтăк-путăк сапласcин тата капиталлă юсав ĕçĕсем ирттериччен ку çул участокĕнчи çул çӳрессин хăрушсăрлăхне тивĕçтерессин ыйтăвĕпе эпир Муркаш район администрацине тата ГИБДД уйрăмне тухрăмăр», – каласа панă Халăх фрончĕн Чăваш Республикинчи регион уйрăмĕн сопредседателĕ Илья Васильев.



**Сăмах май**. Пĕтĕм Раççейри халăх фрончĕ (ОНФ) – ку вăл общественăлла юхăм. Ăна РФ Президенчĕн Владимир Путинăн пуçарăвĕпе 2011 çулхи май уйăхĕнче йĕркеленĕ. Вăл çĕршыври активлă тата пуçарулла çынсене пĕрлештерсе тăрать. Юхăмăн лидерĕ – Владимир Путин. ОНФ тĕп задачисем – çĕршыв ертӳçин указĕсемпе хушăвĕсене вырăнсенче мĕнле пурнăçланине тĕрĕслесе тăрасси, коррупципе тата пурлăха салатнипе, патшалăх укçи-тенкипе эффективлă усă курманнипе кĕрешесси, пурнăç пахалăхĕн тата граждансен прависене хӳтĕлессин ыйтăвĕсене тимлĕхре тытасси.

**Е. ВАСИЛЬЕВА,**
**пĕтĕм Раççейри «Народный фронт «За Россию» общественăлла юхăмăн Чăваш Республикинчи регион ĕçтăвкомĕн массăллă информаци хатĕрĕсемпе ĕçлекен координаторĕ.**

**Тасалăхпа тирпейлĕхшĕн**

# Лаптăка тасатса тирпейлемелле

***Россельхознадзор управленийĕ август уйăхĕнче ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсене вырăна тухса тĕрĕсленĕ чухне Муркаш районĕнче 0,25 гектар лаптăк çинче санкцилемен свалка тупса палăртнă. Çĕр участокĕ – муниципалитет районĕн харпăрлăхĕнче. Санкцилемен свалкăра йăлари ăпăр-тапăра, строительство материалĕсен юлашкийĕсене купаласа тултарнă.***

Йăлари тата промышленноç çӳп-çапне, ăпăр-тапăрне утилизацилесси тата тирпейлесси Муркаш районĕн вырăнти пĕлтерĕшлĕ ыйтăвĕсен шутне кĕрет. Законодательствăпа пăхса хунă тăрăх, çĕрпе усă куракан ăна тивĕçлĕ шайра тытса тăма, йывăççемпе тĕмсем тата çумкурăк ӳссе каясран мероприятисем ирттерме тивĕç. Йĕркене пăснă тĕслĕх тупса палăртнă май, Россельхознадзор управленийĕ Муркаш район администрацине обязательнăй требованисене пăсма юраманни пирки асăрхаттарнă.

Çулталăк пуçланнăранпа Россельхознадзорăн Чăваш Республикинчи тата Ульяновск облаçĕнчи управленийĕ, тĕрĕслевпе надзор мероприятийĕсем ирттернĕ май, Чăваш Республикин территорийĕнче пĕтĕмĕшле 0,62 гектар лаптăк йышăнакан санкцилемен 12 свалка тупса палăртнă.



**Россельхознадзорăн Чăваш Республикинчи тата Ульяновск облаçĕнчи управленийĕ.**

**Çĕнĕ саккун**

# Тислĕк каяш е каяш мар?

Кăçалхи июль уйăхĕнче Раççей Президенчĕ Владимир Путин федерацин 248-мĕш номерлĕ «О побочных продуктах животноводства и о внесении изменений в отдельные законодательные акты Российской Федерации» Саккуна алă пуснă. Документ «побочные продукты животноводства» ăнлав мĕне пĕлтернине палăртать. Ку вăл – ял хуçалăх выльăх-чĕрлĕхне тытса усранă чухне пухăнакан (ун шутне тислĕк, айсарăм кĕреççĕ), ял хуçалăх производствинче усă куракан хушма продукци.

Выльăх-чĕрлĕх отраслĕнчи хушма продукци каяш (отход) шутне кĕмест.

«Ăна пухмалли тата усă курмалли требованисене пăхăнни кирлĕ. Требованисене пăхăнманнипе тавралăха, вăл шутра тăпрана, шыв объекчĕсене, вăрмансене варалани пулмалла мар», – пĕлтернĕ патшалăх çĕр надзорĕн Чăваш Республикинчи пайĕн пуçлăхĕ Виталий Шашкаров.

Вăл ăнлантарса панă тăрăх, енчен те Россельхознадзор управленийĕн специалисчĕсем тĕрĕслев ирттернĕ чухне тислĕке упрассипе требованисене пăснине тупса палăртаççĕ пулсан, ун чухне тислĕке каяш тесе йышăнаççĕ. Ун чухне тислĕк хуçин çут çанталăка кӳнĕ тăкака саплаштармалла пулать. Йĕркене пăснипе çыхăннă тĕслĕхсен переченьне правительство çирĕплетет.

Выльăх-чĕрлĕх отраслĕнчи хушма продукцие (тислĕке) усă куриччен ятарлă площадкăсенче кăна усрама тивĕç.

Ял хуçалăх продукцийĕ туса илекен предприяти-организацисем выльăх-чĕрлĕхе тытса усранă чухне пухăнакан япалана хушма продукци шутне кĕртесси е кĕртес марри пирки хăйсем йышăну тума тивĕç. Кунпа пĕрлех вĕсен çак йышăну пирки Россельхознадзорăн регион управленине пĕлтермелле.

Çĕнĕ саккунăн тĕп тĕллевĕ выльăх-чĕрлĕх отраслĕн хушма продукцийĕпе ял хуçалăх производствинче усă курассин эффективлăхне ӳстересси, вăл шутра ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсен пулăхне ӳстересси пулса тăрать.

Федерацин çĕнĕ саккунĕ 2023 çулхи мартăн 1-мĕшĕнчен вăя кĕрет.

**Россельхознадзорăн Чăваш Республикинчи тата Ульяновск облаçĕнчи управленийĕ.**

**Кĕрхи вăрманта**

# Кăмпана каяр-и?

***Кăмпана унăн пахалăхĕпе тутине кура мĕн авалтанах иккĕмĕш ашпа танлаштарнă. Кăçалхи çул нӳрĕкĕ çителĕклипе тĕрлĕ кăмпа тухсах тăрать. Ӳркенменнисем вăрмана кăмпана васкаççĕ, куллен кăмпа татса килеççĕ. Халĕ çынсем шурă кăмпа, хыр кăмпи, кăрăç тата ытти кăмпа татаççĕ. Часах уплюнкка та тухма тытăнать.***

***Мĕн пĕлмелле-ха кăмпасăн? Чи малтанах кăмпа татас вырăн таса пулмаллине шута илмелле. Кăмпа ытларах усă вырăна юратать. Çавăнпа та кăмпа шыраса чăтлăха кĕрсе кайма тăрăшмалла мар. Пысăк шлепкеллĕ кăмпан тунин пахалăхĕ çук. Пĕчĕк шлепкеллĕ кăмпа лайăхрах, зонтик евĕр сарăлса ларнин пахалăхĕ пĕчĕк тата вăл хуртлă пулма пултарать. Сарăлса çитнĕ кăмпапа наркăмăшланма та пулать, çавăнпа та ăна таммасан лайăхрах та. Татса килнĕ кăмпана çийĕнчех пĕçерсе тирпейлемелле, хăш-пĕр йышшине пĕр талăклăх шыва ислетме ярса лартмалла.***

***Типĕтнĕ кăмпа та апат-çимĕç хатĕрленĕ çĕрте лайăх. Пĕчĕк кăмпасене çип çинче типĕтмелле. Çапла тусан токсинсем пăсланса пĕтеççĕ. Кăмпа йывăр çимĕç шутланать, çавăнпа та ăна пĕлсе тата асăрханса çимелле.***

# Иммунитета çирĕплетме пулăшать

Сар кăмпа (лисичка) çини, ытти кăмпа пекех, çыннăн сывлăхĕшĕн хăрушă мар. Анчах та кăмпа пухмалли тата хатĕрлемелли правилăсене пăхăнмасан, сывлăха сиен те кӳме пулать. Диетолог-эндокринолог врач Антон Поляков каласа панă тăрăх, сар кăмпа ыттисенчен иммун системине йĕркелессин тата паразитсемпе кĕрешессин эффекчĕпе уйрăлса тăрать.

– Вĕсенче çавăн пекех D-манноз (икĕ химия япали) пур. Ку комбинаци хăш-пĕр паразитсен çăмартисене аркатма пулăшать. Сар кăмпапа усă курни паразитсемпе кĕрешессин альтернативлă программисем хушшинче чи ăнăçли пулса тăрать, – тесе палăртнă вăл.

Кунсăр пуçне врач хушса çавăн пирки те каласа панă. Сар кăмпара эргостерол (D2 витамин) та пур. Çавăн пекех вăл çӳхе тата хулăн пыршăлăхри патогенлă çĕрпе ӳсессине те путарать.

А. Поляков кăмпана пăспа е ахаль пĕçернине те, шаритленине те, типĕтнине тата тăварланине те çиме сĕнет. Çапах та, усăлăхне пăхас пулсан, маринадланине, тăварланине тата хупласа пăспа пĕçернине пысăкрах тимлĕх уйăрать.

# Куç сывлăхĕшĕн мĕн пĕчĕкренех тăрăшмалла

Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланнă май, Роспотребнадзорăн Чăваш Республикинчи управленийĕ çавăн пирки аса илтерет. Ачасен куç курасси мĕнле аталанса пынине пысăк тимлĕх уйăрни кирлĕ. Профилактика мероприятийĕсене ача шкула çӳреме тытăниччен анлăн йĕркелес пулать. Мĕншĕн тесен ку вăхăтра ача ӳсĕмне кура унăн куç курасси епле аталанасси çине витĕм кӳме кая юлман-ха.

Ачан организмĕ кирек епле япала тĕлĕшпе те питĕ сисĕмлĕ. Çавăнпа та шăпах ача çулĕсенче куç курассине аталантарассин тата куç чирĕсен профилактикин ыйтăвĕсем кун йĕркинчен тухмалла мар.

Куç лайăх курасси тĕрлĕ факторсенчен килет. Вăл шутра шалти факторсем те (чирсем пурри, мĕнле апатланни, несĕллĕх мелĕпе куçакан самантсем т. ыт. те), тулашри факторсем те (тĕрлĕ енлĕ аманни, ӳкни, куçа сиенлени, куçшăн япăх условисенче ĕçлени т. ыт. те) пур.

Ача организмĕ ӳссе аталанса пынипе пĕрлех унăн куç элеменчĕсем те чылай улшăнаççĕ, оптика системи йĕркеленет. Асăннă процесс уйрăмах ачан 1 çултан тытăнса 5 çулччченхи ӳсĕм тапхăрĕнче интенсивлă пулса иртет. Ку тапхăрта куçăн калăпăшĕ самай пысăкланать, унăн пăрса ярассин вăйĕ тата куç шăрçин йывăрăшĕ чылай ӳсеççĕ.

Çакă вăл куç çивĕчлĕхĕ çинче те (куç япаласене уçăмлăн курма пултарни), çавăн пекех рефракци çинче те (куçăн пăрса ярассин вăйĕ) палăрать. Ачасен куç çивĕчлĕхĕ (норма 1,0 танлашать) тӳрех йĕркеленсе çитмест. Çакă унăн ӳсĕм çулĕсенчен килет. Ытларах ача инçетрине патĕнчинчен лайăхрах курассин рефракцийĕпе çуралать. Çакă вăл ача шкул ӳсĕмне çитмен чухне те (3 çултан тытăнса 5 çулччен) сыхланса юлать. 6 çултан иртсен кăна ачан куç кураслăхĕ нормăна кĕрсе çитме тытăнать.

3 çултан тытăнса 7 çулченхи ачасем хушшинче сывăхрине çеç курнипе аптăракансем те сахал мар. Специалистсем палăртнă тăрăх, шкул çулне çитмен ачасем хушшинче сывăхрине çеç курассин шайĕ 2 хута яхăн ӳсет: 3 çул тĕлне кун пеккисен шучĕ 1,5 процент пулсан, 7 çул тĕлне 3 процента çитет.

1-мĕш класа каякансем хушшинче ачасен 15 – 20 процентĕн куç çивĕчлĕхĕ 1,0 виçерен каярах (тĕрĕссипе ытларах чухне инçетрине лайăхрах курассин сыхăннă). Кун пек ачасен куç çивĕчлĕхĕ пăсăлни шкул çулĕсенче мар, шкул çулĕччченех пулнă.

Шкул çулне çитмен ачасене ытлашши васкаса саспаллисемпе паллаштарма тытăннине, вулама хăнăхтарнине, ачасем гаджетсемпе нумай ларнине пула йĕркеленсе çитмен куç системи çине пысăк тиев лекет. Çавна май унăн резерв майĕсем чакаççĕ, кайран вара çакă куç чирĕсене те пуçарма пултарать.

Енчен та малтанхи вăхăтра ачасем килте ытларах чухне ӳкерчĕксем тунă, пластилинран кĕлеткесем ăсталанă, çырнă тата вуланă, конструкторпа аппаланнă пулсан, хальхи ачасем ытларах вăхăта телевизор экранĕ умĕнче е электрон устройствăсемпе вăйăсем выляса ирттереççĕ. Кун пек чухне вара вĕçĕм тимлĕхре пулнипе куç çине питĕ пысăк нагрузка лекет.

Ачасен куç курасси пăсăлни ытларах чухне чалăш куç пулнипе тата сывăхрине çеç курнипе çыхăннă. Ачасен куç чирĕсене асăрхаттарас тесен, сиплев тĕрĕслевĕсене вăхăтра çӳрес пулать (3 çулта чухне – çур çулта пĕрре), 4 – 7 çулсенче – çулталăкра пĕрре). Çавна ан манăр: куç курасси ку е вăл тĕрлĕ пăсăлма тытăннине мĕн чухлĕ маларах тупса палăртаççĕ, сиплев çавăн чухлĕ ăнăçлăрах пулать.

**Ачан куç курассине мĕнле сыхласа хăвармалла е лайăхлатмалла?**

Куç курасси пăсăлассине асăрхаттарас тĕлĕшпе чи пĕлтерĕшли организма пĕтĕмĕшле çирĕплетесси пулса тăрать. Çавна валли ачан уйрăм кун йĕркине туса хатĕрлемелле, йĕркеллĕ мар условисенче куç çине чылай вăхăт пысăк нагрузка лекекен тĕслĕхсем пулмалла мар (сутă çителĕксĕр пулни, меллĕ мар поза, сĕтел-пукан ачан ӳсĕмне кура пулманни). Кулленхи режима пăсни шутĕнчех çителĕклĕ таран çывăрманни те, усă сывлăшра çителĕксĕр пулни те, хускану активлăхĕ пĕчĕк пулни те.

Куç валли тĕрлĕрен хăнăху йăлисене ача 2 – 3 çулта чухнех йĕркене кĕртес пулать. Хăвăрăн ачана вăхăтран вăхăта куçа мăчлаттарма хăнăхтарăр, курпун кăлармасăр ларма вĕрентĕр, ытлашши тилмĕрмесĕр пăхма тăрăштăр, куç ытамне ытларах та ытларах сывăхри япала çинчен аякри çине тата аякри çинчен сывăхри çине куçарма вĕрентĕр. Çак упражненисем малтан вăйă шутĕнче пулсан, малашне йăлана кĕрсе пычăр. Чылай вăхăт уйрăлмасăр телевизор пăхни, компьютер умĕнче е планшетпа, смартфонпа ларни куç çине питех те япăх витĕм кӳрет.

Ачан куç курассине сыхлама килти условисенче занятисене тĕрĕс йĕркелес пулать. Куç курассине сыхлама е лайăхлатма ятарлă теттесем тата вăйăсем суйласа илмелле. Сикекен, чупакан, кусакан, çавăрнакан кирек епле тетте те усăллă. Мечĕкпе вылямалли вăйăсем те усă кӳреççĕ. Тилмĕрсе пăхмалли вăйăсенче ирттерекен вăхăта чакарсан тĕрĕсрех пулать. Кусем вĕсем шахмат, шашка, пуçватмăш т. ыт. те.

3 – 5 çулхи ача валли кулленхи занятин пĕтĕмĕшле вăхăчĕ 40 минутран ытла, 6 – 7 çулхи валли – 1 сехетрен ытла пулмалла мар. Ачасен занятийĕсене кунăн пĕрремĕш çуррине те, иккĕмĕш çуррине те йĕркелесен лайăх. Вĕсем хушшинче вара канма, активлă вăйăсем выляма, усă сывлăшра пулма та вăхăт уйăрмалла. Куçа тимлĕхре тытма ыйтакан пĕр типлă занятисем 10 – 15 минутран ытла тăсăлмалла мар.

Ачасене пӳлĕм тăрăх утма, чупма, физкультура упражненийĕсем пурнăçлама май туса памалла. Чӳрече патне пырса инçете тинкерме те пултарчăр.

Шкул çулне çитмен ачасен татти-сыпписĕр пăхасси е занятисен тăршшĕ 30 минутран иртмелле мар. Куç валли чи лайăххи – телевизор экранĕ 2,0 – 5,5 метрта пулни. Компьютер умĕнче ларнă чухне монитортан 40 сантиметр инçĕшĕнче пулмалла. Айккинче мар, экрана хирĕç лармалла. Кун пек чухне пӳлĕмре çутă çителĕклĕ пултăр. Хĕвел çути е лампочка çути ачан куçĕ çине ан ӳктĕр. Занятисем вăхăтĕнче çутă кĕнеке, тетрадь çине пĕр тикĕс ӳкмелле. Çав вăхăтрах ачан пуçĕ тата пичĕ çутă ӳкмен хӳтĕре юлмалла. Чи лайăххи – сĕтел çине лартмалли лампăпа усă курни. Çакă уйрăмах тĕттĕм чухне пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать. Ача пуçне ытлашши ан пĕктĕр. Кĕнеке е тетрадь куçран 30 – 35 сантиметрта пулсан лайăх. Кунпа пĕрлех кĕлеткене тĕрĕс тытасси пирки те манма кирлĕ мар. Май пур таран ирĕклĕрех ларма тăрăшмалла, курпунланмалла мар, куç валли гимнастика тăтăшах ирттермелле.

**Г. ВОРОБЬЕВА,**
**Роспотребнадзорăн Чăваш Республикинчи управленийĕн тĕп эксперт специалисчĕ.**

# Ачасен апатланăвне тĕрĕс йĕркелемелле

***Татьяна Мещерякова диетолог врач, «Известия» хаçат корреспонденчĕпе калаçнă май, ачасен апатланăвне йĕркеленĕ чухне ашшĕ-амăшĕ тăвакан тĕп йăнăшсем пирки каласа панă. Ачасен рационĕнче йăпăрт-япăрт çырткаламалли булочкăсем, шоколадсем, çĕр улми чипсĕсем тата сухарисем пулмалла маррине асăннă.***

Вăл палăртнă тăрăх, кун пек продуктсем ансат углеводсем пулса тăраççĕ. Çитменнине хăш чухне вĕсенчи çу та пахалăхлă мар. Меллĕ тата компактлă пулнине пăхмасăрах, вĕсем сывă апатлануna пачах çыхăнман. Кун пек продуктсем вырăнне улма-çырла, типĕтнĕ улма-çырла, тăпăрчă е сырникcем, чĕрĕ пахча çимĕç пулсан лайăхрах. Усăллă çимĕç шутĕнчех ăшне тĕрлĕ продукт хурса пĕçернĕ лаваш та.

Ачасен рационĕ çитĕнниcенчен уйрăлса тăрать. Мĕншĕн тесен ачасен организмĕ активлă ӳсĕм тапхăрĕнче. Çавăнпа та вĕсен организме тĕртĕмсем, çавăн пекех çусемпе фосфолипидсем йĕркелеме белок нумай кирлĕ. Ку япаласем чи малтанах нерв системин ĕçне-хĕлне пулăшаççĕ.

Модăллă шутланакан кирек епле диета та ачашăн кирлĕ мар. Мĕншĕн тесен ача организмĕ витаминсемпе микроэлементсем ытлă-çитлĕ илсе тăма тивĕç. Калори çитменни, уйрăм ушкăн витаминĕсем тата аминокислотасем пур продуктсенчен пăрăнни малашне ачан организмне самай сиен кӳме пултарать. Енчен те çемйипех вегетари апатланăвĕн стильне тытаççĕ пулсан та, ашшĕ-амăшĕн хăйсен ачи валли тĕрлĕ енлĕ рацион туса памалла, вылькăх-чĕрлĕх белокне ӳсен-тăран белокĕпе ылмаштармалла.

Ачасен апатланăвне тĕрĕс йĕркелессинче ашшĕ-амăшĕн тĕслĕхĕ те пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать. Час-часах тĕрĕс мар апатланнин сăлтавне тарăнрах тишкермелле. Хăш чухне ашшĕ-амăшĕ ачалăх çулĕсенченех пылак, фастфуд тата газировка нумай йышăнать, кунта япăххине нимĕн те курмасть. Кун пек ашшĕ-амăшĕ ачине тĕрлĕ енлĕ тутлă апатланăва, пылак вырăнне чĕрĕ пахча çимĕç çиме, газировка вырăнне таса шыв ĕçме хăнăхтарас вырăнне хăйсен тĕслĕхĕпе пачах урăххине кăтартса парать.

Ача темĕн те çиме пултарать, унăн организмĕ кирек епле продукта та йышăнать тени питех те йăнăш. Хальхи вăхăтра вăтамран ачасен 19 процентĕн йывăрăшĕ нормăран ытларах. Ачасен психики çавăн пек: айккинчи шухăша, рекламăна тата упаковка çинчи хитре ӳкерчĕксене вĕсем хăвăрт йышăнаççĕ. Çавăнпа та ачасене чи пĕчĕкренех тĕрĕс апатланма хăнăхтарасси, çакна ашшĕ-амăшĕ енчен тĕрĕслесе тăрасси питех те пысăк пĕлтерĕшлĕ.



Шкул ачин апатланăвне унăн ӳсĕмне тата унăн организмне мĕн кирлине кура йĕркелеççĕ. Базăлла сĕнӳ – кунне виçĕ-тăватă хут апат йышăнмалла. Енчен те ачана тивекен нагрузка пысăк, вăл нумай куçса çӳрет пулсан, апатлану лайăхрах пулмалла. Çапах та кирек епле пулсан та шкул ачин кулленхи рационĕ 1300 – 1500 килокалорирен кая пулмалла мар. Унсăрăн сывлăх тĕлĕшпе йывăрлăхсем пулма пултараççĕ.

# Холестерин шайне чакаракан вунă çимĕç

Юнри холестерин шайĕ нормăпа 3,6 – 5,2 ммоль/л чухлĕ пулмалла. Çӳлти кăтарту мĕн чухлĕ пуласси çын арçын е хĕрарăм пулнинчен тата унăн ӳсĕм çулĕнчен килет.

Холестеринăн тĕп «инкекĕ» тата хăрушлăхĕ çавăнта: вăл юн тымарĕсен стенкки çумне «çыпăçса ларнипе» атеросклероз муклашкисем йĕркеленеççĕ, вĕсем юна пуç мимин клеткисем патне кислород çитерме чăрмантараççĕ.

Çавна та каламалла. Холестерин организма апат-çимĕç урлă кăна лекмест, ăна пĕвер те çыхăнтарса пĕрлештерет. Çавăн пекех холестерин сиенлĕ кăна тени те тĕрĕс пулмасть. Холестерин пулмасан çын хăвăртрах ватăлать, организм çусене тата çăва ирĕлтерекен витаминсене йĕркеллĕ йышăнма пăрахать.

Енчен те холестерин организма апат-çимĕç урлă лекме пултарать пулсан (калăпăр, çуллă çимĕçпе), асăннă япала шайне чакарма пултаракан продуктсем те пурах ĕнтĕ. Пĕтĕмпех тĕрĕс. Вĕсем вара врач çырса панă медицина препарачĕсен лайăх пулăшуçи пулса тăрĕç. Холестерин шайĕ пысăк чухне диетологсем чи малтанах рационран çуллă, шаритленĕ, тĕтĕмленĕ продуктсене кăларма, вĕсен вырăнне ансат тата усăллă продуктсем кĕртме сĕнеççĕ.

**1. Шăланăн туратти тирет, çырли вара усăллă**

Çак ӳсен-тăран çырлинчен вĕретнĕ чее холестерин шайĕ пысăк чухне вĕçĕмех ĕçме юрать. Вăл пĕвере йĕркеллĕ ĕçлеме, холестерин шайне чакарма пулăшать. Шăлан çырли С витаминпа пуян. Çавăнпа та вăл кĕрхи сивĕсем пуçланас умĕн иммун системине те çирĕплетĕ.

**2. Пахча патши – кавăн**

Кавăна чылай чире сиплемĕ чухне комплекслă терапи шучĕпе çиме сĕнеççĕ. Вĕсен шутĕнче подагра, простатит, гипертони, пӳре тата пĕвер ыратни, ӳт-тир чирĕсем, ӳсĕрни тата ОРВИ. Кавăнра клетчатка питĕ нумай тата вăл организмран сиенлĕ япаласене кăларать. Кунпа пĕрлех ытлашши холестеринран та хăтăлма пулăшать.

**3. Рис – хĕрли, якатманни**

Рисăн çак сортĕнче статин нумай. Вĕсем вара пĕвере холестерина пĕрлештерме памаççĕ. Апла пулсан вăл юнра ытлашши нумай пулмĕ.

**4. Мăйăрăн усси пысăк**

Мăйăрти омега-3 тата омега-6 çу кислотисем атеросклероз муклашкисене йĕркелеме чăрмантараççĕ. Миндальри тата кешьюри магни вара юн тымарĕсене пиçĕ тăвать, çавна май атеросклероз муклашкисем çухалаççĕ. Мăйăрсенчи ӳсен-тăран пĕрлешӳĕсем – флавоноидсем – юн тымарĕсен стенккисене çирĕплетеççĕ. Арахис, вăрман мăйăрĕ тата миндаль пĕвершĕн усăллă. Врачсем холестерин шайĕ пысăк чухне мăйăра чĕрĕлле, вĕри температурăра хатĕрлеменнине çиме сĕнеççĕ.

**5. Фасоль, нимĕç пăрçи, ясмăк**

Çавăн пекех пăрçа! Çут çанталăкăн çак çимĕçĕсем пысăк калорипе палăрма пултараймаççĕ. Çапах та вырă туяссине ирттереççĕ. Вĕсенче те, кавăнри пекех, клетчатка нумай. Пăрçа продукчĕсем «япăх» холестерина сăрхăнса кĕме памаççĕ.

**6. Йĕтĕн вăрри**

Йĕтĕн вăрри В3 тата В9 витаминсен çăлкуçĕ пулса тăрать. Ку витаминсем çу ылмашăвне йĕркелеме пулăшаççĕ, апла пулсан атеросклероз муклашкисем йĕркеленессине асăрхаттараççĕ. Кунсăр пуçне йĕтĕн вăрринче селен çителĕклĕ – «лайăх» холестерин шайне ӳстерет, «япăххин» шайне чакарать.

**7. Олива çăвĕ, хĕвелçаврăнăшĕн мар**

Чи малтанах олива çăвĕ ват кăларма пулăшнипе палăрса тăрать. Унра çу кислотисем нумай. Ку вара холестерин шайне чакарассипе пĕлтерĕшлĕ. Фитостеринсем вара организма сиенлĕ липопротеидсенчен хăтăлма пулăшĕç.

**8. Хура пилеш тата çуллă пулă – юн тымарĕсем валли**

Тăкăскă ку çырла юн тымарĕсемшĕн усăллă: вĕсен стенккисене çирĕплетет, çавăн пекех пĕвере лайăххăн ĕçлеттерет. Пулăри омега-3 триглицеридсен шайне чакарать, юн тымарĕсене лайăх витĕм кӳрет.

**9. Симĕс чей – апатланнă хыççăн 30 минутран**

Симĕс чейре катехинсем пур. Вĕсем апат-çимĕçрен холестерин сăрхăнассине чакараççĕ. Диетологсем чее апатланнă хыççăн тӳрех ĕçме сĕнмеççĕ. Çур сехетрен ĕçсен лайăхрах. Ученăйсем çирĕплетнĕ тăрăх, симĕс чей ĕçни атеросклерозпа çыхăннă улшăнусем пулма пултарассине 70 процент таран чакарма май парать.

**10. Ыхра – шăнса чирлесен кăна мар**

Çапла, ыхрана ытларах чухне кĕркунне е хĕлле çиме тăрăшаççĕ. Ку вăхăтра шăнса пăсăласси ытларах пулма пултарать. Ыхра вара ОРВИ-пе тата гриппа кăна мар, çавăн пекех тромбла та кĕрешет иккен – вĕсене йĕркелеме памасть. Кунсăр пуçне ыхра юн пусăмне тата юнри липидсен шайне виçеллĕ тăвать.

# Груша ӳстерес тетĕр пулсан



Енчен те сирĕн пахчара груша çук пулсан, епле пулсан та ăна валли эсир вырăн тупма тивĕç. Мĕншĕн тесен вăл усăллипе пĕрлех тутлă та.

Груша хунавĕ валли кăпăшка çĕр пулсан аван. Мĕншĕн тесен кун пек чухне тымарсем патне кислород лайăх пырать, нӳрĕк те çителĕклĕ тытăнса юлать. Анчах та кашни регионта çĕр структури пĕр пек мар. Пĕлтерĕшли – ăна валли хĕвеллĕ вырăн суйласа илмелле. Ӳсен-тăран вăтам шăварнине килĕштерет. Грушăна кĕркунне те, çуркунне те лартса хăварма юрать. Апла пулин те кĕркунне лартни лайăхрах. Çуркунне вăл ытти ӳсен-тăранпа пĕрле хĕл ыйхинчен «вăранать», кун пек чухне ăна мĕн çитменнине, мĕн çине ытларах тимлĕх уйăрмаллине те асăрхама лайăхрах.

**Грушăна мĕнле лартмалла?**

Лартмалли вырăна суйласа илетпĕр те шăтăк алтатпăр. Шăтăкран тухнă тăпрана обязательнăй майпа кирек епле органикăпа та пулин хутăштаратпăр: компостпа е тислĕкпе. Инструкципе çакăнтах фосфорпа кали удобренийĕ те хушас пулать, 2 апат кашăкĕнчен ытла мар. Енчен те сирĕн çĕр участокĕ йӳçек тăпраллă пулсан, кăштах извеç те хушма ирĕклĕ.

Эсир çамрăк йывăçа хушма апатланупа тивĕçтерес тетĕр пулсан, тăпра хутăшне çакăн пек йĕркелеме пулать: 2 витре торф, 3 витре çĕрĕк тăпри (компост е хăйĕн тăпри), 2 витре хăйăр, 2 стакан йывăç кĕлĕ, 1 стакан суперфосфат.

Çуркунне е кĕркунне лартнин хăйĕн лайăх енĕсем пур. Çуркунне – лартнă йывăç кĕркуннеччен çирĕпленме ĕлкĕрет, кĕркунне – писĕхет тата иммунитета лайăхлатать.

Лартнă чухне тымарлăх мăйĕ çĕр çинче 3 сантиметрта юлмалла. Тымарсене лайăх саркаламалла та тăпрана тултармалла. Хунав йĕри-тавра тăпрана алăпа тата урапа таптаса пусăрăнтарас пулать. Кун хыççăн лайăх шăварас пулать, 1 çамрăк йывăçа 20 литр таран шыв кирлĕ пулать. Кайран юнашар шалча çапса лартмалла та йывăça ун çумне кăкармалла. Анчах та карăнтарса çыхмалла мар.

Малтанхи вăхăтра грушăн тымар системи сисĕмлĕ. Çавăнпа та лартнă хыççăн вулă тавра çĕре хупласан лайăх. Кĕркунне çулçăсемпе хупласа ăшă тытмалла тума пулать, хĕлле юрпа витмелле.

**Грушăна мĕнле шăвармалла?**

Çамрăк йывăça та, пысăккине те икĕ эрнере пĕр хут ытлăн-çитлĕн шăварма сĕнеççĕ. Шыва пăрахпа тураттисемпе çулçисем çине сирпĕтсен лайăх. Вулли йĕри-тавра тăпрана кăпкалатса тăма, çумкурăксене иртсе тăма манмалла мар.

**Хăçан тата мĕнле удобрени кирлĕ пулать?**

Икĕ çулта пĕрре вулли йĕри-тавра органика хывас пулать. Кролик тислĕкĕ питĕ лайăх. Çĕрĕк тăприпе, компостпа та усă курма май пур.

Халĕ вара çамрăк тата пысăк йывăçа тимлĕ сăнаса пăхăр. Икĕ-виçĕ çултин тураттисем çу кунĕсенче вăтамран 40 сантиметра яхăн ӳснĕ пулсан, хушса суперфосфатпа апатлантарас пулать. Çитĕннĕ йывăçăн ӳсĕмĕ 20 сантиметр ытла пулмалла. Унран сахалрах пулсан, ăна та хушса апатлантарни кирлĕ пулать.

Кĕркунне грушăна 10 литр шыва 1 апат кашăкĕ сернокислăй кали хушса апатлантармалла е 10 литр шывра 1 чей кашăкĕ кали монофосфачĕ ирĕлтернĕ хутăшпа.

**Туратсене касасси – кирлĕ ĕç**

Груша хунавне лартнă хыççăн туратсене касас пулать. Йывăçăн туратлă тăррине йĕркеленĕ май, çак ĕçе çуллен туса иртерни кирлĕ. Çăралса кайнă туратсене тата хунавсене вăхăтра иртсе тăмалла.

Ытларах чухне питомниксенче 2 тата 3 çулхи хунавсене сутаççĕ. Лартнă хыççăн малашне аталанмалли туратсене кăна хăвармалла. Ку ӳсĕмре вĕсен айккинчи хунавĕсем 8 таранах пулаççĕ. Вĕсенчен 4 хăварсан çителĕклĕ. Вĕсен хушши пĕр пекрех пулсан лайăх.

Енчен те лартма 1 çулхи хунава суйласа илнĕ пулсан, ăна секаторпа кĕскетмелле. Çӳллĕшĕ çур метр пулмалла.

Пĕлтерĕшлĕ татах тепĕр самант. Груша лайăх туратлантăр тетĕр пулсан, пур турата та 1/4 пайĕ чухлĕ кĕскетме сĕнеççĕ.

# Сырлан

Сырлан (облепиха) тăмлă вырăна килĕштермест. Ана хăйăрлă, торфлă, çĕрнĕ пăчкă кĕрпиллĕ, тĕрлĕрен органика удобренийĕсемпе хутăштарнă çĕр юрăхлă. Сырлан ытларах хĕвеллĕ вырăна юратать. Вăл 10 метр таран та ӳсме пултарать. Çырли пăрçа пысăкăш пулса çитсен, тĕсĕ сарă е сарăрах хĕрлĕ пулать. Ун чух варени, желе е ытти çимĕç тума юрăхлă. Сырланăн 2 – 7 сантиметр тăршшĕ тирекен вĕтĕ туратсем пур. Çулçи тăсланкă, тĕсĕ – хăмăртарах е сарăпа витнĕ кĕмĕл тĕслĕ.

Çырла пултăр тесен, сырланăн амапа аçа тĕмĕсене юнашар лартаççĕ. Вĕсен хушши 2,5 – 3 метр пулмалла. Икĕ – тăватă ама тĕмĕ пуçне пĕр аçа тĕм çителĕклĕ.

Амипе аçине уйăрма кĕркунне е çуркунне сырлан тĕмми виçĕ-тăватă çула çитсен тин пулать. Ама тĕмĕри папакасем икĕ-виçĕ хупăллă. Аçа тĕмĕн папакисем шултрарах, хуппи нумайрах, вĕсем кедр е хыр мăкăлĕ евĕрлĕ.

Сырлан тымарĕ çиелте аталанать. Çавна шута илсе, унти çĕре чавма юрамасть, 5 сантиметр тарăнăшĕнчен ытлашши кăпкалатмалла мар, кĕреплепе е культиваторпа кăпкалатмалла, час-часах шăварса тăмалла.

Тепĕр чухне, май уйăхĕн вĕçнелле, ăна сырлан пыйти те ерме пултарать. Вĕсем çулçăн аял енне вырнаçаççĕ те ӳсен-тăран сĕткенне ĕмме тытăнаççĕ.

Сырлан пыйтине пĕтерме ăна хуçалăх супăнĕ ирĕлтернĕ сивĕ шывпа сапма тăрăшмалла. Табак кĕлĕпе сапни те усăллă, ыхра шывĕ те аван пулăшать (200 – 300 грамм ыхра – 10 литр шыв çине). Кукшапуç шывĕ те аван.

Сырланра этеме усăллă витаминсем пур: C, P, K1, B, B1, B2. Унсăр пуçне, каротин та нумай тата сайра тĕл пулакан E витамин пур. Сырлан нерв системине лăплантарма пулăшать, пĕвершĕн те усăллă, юн пусăмне йĕркене кĕртет. Юн тымарĕн чирĕсенчен тата атеросклерозран сыватать. Сырлан çăвĕ час тӳрленмен сурана, сăмса шăтăкне сĕрме усăллă.

Сырлан çисен, кăкăр ĕмĕртекен хĕрарăмăн сĕт аван анать. Унпа косметикăра та, медицинăра та анлăн усă кураççĕ. Пĕр сăмахпа каласан, вăл – питех те усăллă çимĕç.

Сырлана кĕркунне лартса хăварсан, вăл лайăхрах чĕрĕлĕ.

# Кăпăшка та çăмăл шарлотка

**Кирлĕ:**

– çăмарта – 3 шт.;
– сахăр – 150 гр.:
– çăнăх – 150 гр.;
– пан улми – 3 шт. (пысăккисем, пĕчĕккисем – 6 – 7 шт.);
– лимон сĕткенĕ (1 – 2 чей кашăкĕ);
– корица – 1 чей кашăкĕ кăмăла кура.

**Хатĕрлессин йĕрки:**

1. Пан улмине çăватпăр, варринчен тасататпăр та турам туса ваклатпăр. Енчен те пан улми пылакки пулсан, лимон сĕткенĕпе сирпĕтмелле. Кайран корица сапмалла та хутăштармалла. Çак вăхăта вĕриленме духовкăна чĕртме юрать.

2. Çăмарта ăшне сахăр хушса миксерпа чи пысăк хăвăртлăхпа пăтрататпăр. 7 – 8 минут пăтратас пулать. Кăпăшкарах пуласси нумайрах пăтратнинчен килет. Çавăнпа та масса кăпăшка тата шурă пулнĕ пулсан та 7 минутран кая мар пăтратмалла.

3. Миксера чи пĕчĕк хăвăртлăх çине лартатпăр та тапхăр-тапхăр аланă çăнăх хушса тăратпăр. Типĕ çăнăх курăнма пăрахсан миксера чаратпăр.

4. Çиййĕнчех чуста ăшне пан улми ярса хутăштаратпăр.

5. Шарлотка пĕçермелли форма тĕпне тата айккисене пергамент хучĕ саратпăр. Пергамент лайăх пахалăхли пулсан, çу сĕрме кирлĕ мар. Шанмастăр пулсан вара форма тĕпне тата айккисене ӳсен-тăран е услам çу сĕрес пулать. Унсăрăн шарлотка çыпăçса ларма пултарать. Чустана формăна яратпăр, пан улми муклашкисене чуста ăшне пусăрăнтарса çине тикĕслетпĕр.

6. Формăна 170 – 180 градуса çити вĕрилентернĕ духовкăна ăсататпăр та 30 – 40 минута яхăн тытатпăр. Тĕрĕссипе мĕн чухлĕ тытасси сирĕн шарлотка хулăнăшĕнчен тата духовка майĕсенчен килет. Шарлотка пиçсе çитрĕ тесе шутлатăр пулсан, тĕрĕслесе пăхăр. Чĕрĕ чуста унта пачах пулмалла мар. Енчен те çийĕ хĕрелчĕ, анчах та шарлотки пиçсе çитеймен пулсан, çиелтен фольга хума пултаратăр.

7. Хатĕр кукăле кăларатпăр та сивĕнме лартатпăр. Кайран вара формăран кăларатпăр.

Кăмăл пулсан, çиеле сахăр пудри сапма юрать.

***Апачĕ тутлă пултăр!***



# Помидор сĕткенĕнчи хăяр

***Пысăках мар çамрăк хăярсене суйласа илмелле. 2 – 3 сехет вĕсене сивĕ шывра тытмалла. Хыççăн типĕтмелле, икĕ енчен те пуçĕсене касса илмелле. Енчен те хăяр шултри пулсан, ăна çаврашкасем туса касма пулать. Хыççăн хăяра 3 л банкăна тăчă тултармалла (тĕрĕссипе кирек епле савăтпа та усă курма пулать).***

***Помидора мясорубка витĕр кăлармалла. Сĕткен кăлармалли машинăпа та усă курма пулать. Мясорубка витĕр кăларнин вара томат сĕткенĕ çăрарах пулать. 3 литрлă банка валли 1,5 литр сĕткен кирлĕ. Томат сĕткенне вĕретмелле, сивĕтмелле. 3 апат кашăкĕ тăвар, вĕтĕ туранă пысăк ыхра шăлĕ, вĕтĕ туранă пысăк çупкăм укроп хушатпăр. Çак сĕткене хăяр банкине ямалла та пластмас хупăлчапа хупмалла, холодильнике лартмалла. Тепĕр 5 кунтан закуска хатĕр те. Хаяртарах юратăтăр пулсан, авăртнă хĕрлĕ пăрăç та хушма юрать.***

# Кишĕр пирки пĕлетĕр-и?

***Кишĕрте организма кирлĕ çак япаласем пур:***

– кали (чĕрепе юн тымарĕсен системине йĕркене кĕртет);
– кальци тата фосфор (шăлсене тата шăмăсене çирĕплетеççĕ);
– хлор (организмри шыв балансне йĕркелесе тăрать);
– B, B2, E, K, A, C витаминсем;
– бета-каротин тата A витамин (куçшăн усăллă, куçшăн лайăх витамин пулса тăраççĕ);
– органика кислотисем.

Çавна шута илес пулать:

1. Хăвăрăн рациона кирлĕ витаминсем хушас тетĕр пулсан, çитĕннĕ çыннăн кунне 1 кишĕр те пулин çимелле. Эсир чăннипех 1 кишĕр çиетĕр-и? Ытларахăшĕ – çук. Чи нумаййи вара кунне вăтам кишĕре 4 çиме сĕнеççĕ.

2. Чи усăллă кишĕр – çу кунĕсенче е кĕркунне кая юлса ӳсни. Кун пекки тутлăраххипе пĕрлех усăллă витаминсемпе те пуян.

3. Кишĕре холодильникре усрама сĕнеççĕ. Анчах та полиэтилен пакета хурсан лайăххах.

4. Кишĕр чĕрри те, вĕри температурăра пĕçерни те усăллăхĕпе пĕр пекех пулни пирки калаççĕ. Тĕрĕсех, тутлăхлă япаласем пĕтĕмпех сыхланса юлаççĕ.

***Кишĕрĕн усăллă 6 енĕ:***

1. Çак тымар çимĕçе вĕçĕмех çиме тăрăшăр. Çапла эсир инсульт пулма пултарассине 70 процента çити чакарма пултаратăр. Мĕншĕн тесен кишĕр пуç миминчи юн çаврăнăшне лайăх пулăшать.

2. Кишĕр çыннăн тĕрлĕ органĕсем çине лайăх витĕм кӳрет. Ытларах вара вăл куçшăн усăллă. Çакă вăл кишĕрте A витамин тата каротин пулнипе çыхăннă.

3. Сахăр диабечĕпе аптăракансемшĕн чăн-чăн пулăшакан пулса тăрать. Кишĕр каротиноичĕсем юнри сахар шайне лайăх йĕркелесе тăраççĕ.

4. Чĕрĕ кишĕрĕн питĕ лайăх енĕ пур – вăл юнри холестерин шайне чакарма пултарать. Ку вăл чĕрепе юн тымарĕсемшĕн усăллă.

5. Кишĕр арçынсен потенцине ӳстерме пулăшать. Çакна ученăйсем пĕр хут кăна мар çирĕплетсе панă. Ку вăл кишĕр витаминсемпе пуяннипе çыхăннă. Çавăн пекех арçынсене кишĕр сĕткенĕ ĕçме сĕнеççĕ. Мĕншĕн тесен вăл вăйран кайса ĕçленĕ хыççăн хăвăртарах нормăна кĕме май парать.

